ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Декабрь 25, эрнекун

№ 250 (9159)

Хакĕ 20 пус. 36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
Хамăр республикăра (1 стр.).
СССР Верховнăй Судĕнче (2 стр.).
Н. Пушкин.—Анлă професси (2 стр.).
РАЙОНТИ ХАÇАТСЕНЕ ПАХСА ТУХНИ. Çуракине хатĕрленес ыйтусене куллен çутатса пымалла (2 стр.).
МАЛТА ПЫРАКАНСЕН ОПЫЧĔ. Н. Платонов.—Эпир мĕнле майпа кашни гектартан 317-шер пăт вир пухса илтĕмĕр (3 стр.).
В. Еременко.—Сталинградри гидроэлектростанцие тунă çĕрте (3 стр.).
СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ. Г. Замятин.—Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçласа (3 стр.).
Леонид Елисеев.—Писательсен союзĕн ĕçне лайăхлатмалла. «Литературная газета» хаçатра тухнă «Писательсен икĕ организацийĕ» ятлă статьяран (3 стр.).
СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствинче (4 стр.).
Индири хаçатсем Америка пропагандине тăрăшыа çине кăлараççĕ (4 стр.).
Корейăри Ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕн VII-мĕш пленумĕ (4 стр.).

Сывлăха сыхлас ĕçе лайăхрах йĕркелер

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăхăн материальнăй пурнăçне лайăхлатма тата культурине ÿстерме куллен тăрăшни пирĕн çĕршывра сывлăха сыхлас ĕç малалла аталанса пынинче те уççăн палăрса тăрать. Октябрьти Социализмла Аслă революциччен хальхи Чăваш республикин территорийĕнче мĕн пурĕ те 19 больницăпа фельдшер пункчĕ, вĕсенче 485 койка кăна пулнă. Халĕ пирĕн республикăра больницăсем, диспансерсем, поликлиникăсем 84, вĕсенче 4.105 койка. Совет влаçĕ вăхăтĕнче врачсен йышĕ 20 хут, фельдшерсемпе сестрасен йышĕ 51 хут ÿснĕ. Ерекен чир-чĕрсем сарăлассине чарса лартнă. Трахома чирĕ—чăваш халăхĕн инкекĕ пĕтсе пырать.

Халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн нимĕнрен ытла тăрăшма кирли çинчен Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн, СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕн тата партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсенче каласа панă. Çак решенисенчен тухса тăракан задачăсене медицина работникĕсенчен нумайăшĕ лайăх ăнланса илнĕ. Вĕсем профилактикăлла ĕçе вăйлăтаççĕ, çынсене чир-чĕртен сыхланма вĕрентеççĕ, сывлăх учрежденийĕсенче тасалăх та йĕркелĕх тума пĕтĕм вăя хурса тата пĕлĕве парса ĕçлеççĕ, медицина наукин çитĕнĕвĕсене, малта пыракан опыта пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Куславкка районĕнчи Сала больницине илер-ха. Кирек мĕнле чирпе чирленисене те унта квалификациллĕ пулăшу параççĕ. Вăрмар районĕнчи Арапуç больницинчи врачсем диспансеризаци меслечĕпе ĕçлеççĕ. Вĕсем кашни çыннăн сывлăхне тĕрĕслесе, медицина енĕпе кама мĕнле пулăшу пама кирлине шута илеççĕ, чирлеме пуçланă е чирлĕ çынсене вăхăтра сыватма тăрăшаççĕ.

Хуласенчи хăшпĕр врачсемпе сестрасем, хăйсем кăмăл туса, ялти больницăсенче ĕçлеме кайрĕç. Ялти ĕççыннисем вĕсене хавассăн кĕтсе илчĕç.

Сывлăха сыхлас ĕçре паха тĕслĕхсем чылай пулин те, ку ĕçе пирĕн республикăра кирлĕ пек йĕркелеймен-ха. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн иккĕмĕш сессийĕн постановленийĕнче палăртнă тăрăх, «Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, ĕççынни депутачĕсен район тата хула Совечĕсен исполкомĕсем предприятисенчи, учрежденисенчи, пурăнмалли çуртсенчи санитари йĕркине лайăхлатассишĕн, халăха культурăллă пурăнма хăнăхтарассишĕн тимлĕн кĕрешмеççĕ. Нумай предприятисенче, столовăйсенче, чайнăйсенче тата магазинсенче чи кирлĕ йĕркене те пурнăçласа пымаççĕ. Нумай больницăсенче çемçе тата хытă сĕтел-пукан, кирлĕ хатĕрсем çук... Трахомăран сыватас тĕлĕшпе Комсомольски, Елчĕк, Канаш, Чкаловски, Первомайски районĕсенче ытла та начар ĕçлеççĕ».

Хăшпĕр больницăсенче кучченеçи паха оборудованине туллин усă курмаççĕ. Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи медицина пункчĕ валли тахçанах рентген аппаратне илсе килнĕ, анчах ăна халиччен те вырнаçтарса лартман. Завод администрацийĕ ăна вырнаçтарса лартма пÿлĕм тупса памасть. Чапаевски поселокри больницăра та çавăн пек аппарат пур, анчах врач-рентгенолог çук пирки вăл усăсăр ларать. Шăмăршă больницинче те врач-рентгенолог çук пирки рентген кабинечĕ ĕçлемест. Медснабăн республикăри уйрăмĕ больницăсене кирлĕ оборудовани тата эмелсене çителĕклĕ кÿрсе килме сахал тăрăшать. Поликлиникăсемпе амбулаторисенче врачсем патне кĕме çыранна черет пысăк. Ялти нумай больницăсенчи врачсем диспансеризаци меслечĕпе ĕçлеме халиччен те тытăнман. Врачсем медицина ытăвĕсемпе халăх хушшинче лекцисем, докладсем тата калаçусем сахал ирттереççĕ. Шупашкарта республика больницине тума, Чапаевски поселокра поликлиника, Вăрмарпа Тăвайра больницăсем лартма кăçал панă укçан пысăк пайĕ усă курмасăрах юлать.

Пĕр уйăх каялла Шупашкарта районсенчи сывлăх пайĕн заведующийĕсен канашлăвĕ пулчĕ. Унта больницăсенчи, профилактикăлла ĕçри çитменлĕхсене пĕтересси çинчен калаçрĕç. Çав кунсенче Чăваш АССР Сывлăх министерстви ялти халăха медицина пулăшăвĕ парассине лайăхлатма мĕнле ĕçсем тумаллине палăртса хучĕ. Министерство палăртнă тăрăх, ялсенчи больницăсене, фельдшер-акушер пункчĕсене пулăшма хуласенчен врачсем каймалла. Хуласенчи медицина учрежденийĕсем ялтисене шефа илмелле, трахома тата туберкулез чирĕсене хирĕç кĕрешес ĕçсене лайăхрах йĕркелеме пулăшмалла. Кашни больницăрах лаборатори тумалла. Чылай больницăсенче электричество çутипе сыватакан кабинетсем уçмалла тата ытти ĕçсене те тумалла. Вăхăт иртсе пырать, министерство хăй палăртса хунă ĕçсене пурнăçа кĕртме васкатмасть. Хуларти врачсене нумай вăхăтлăха е яланлăха яла ĕçлеме ярассине халиччен те кирлĕ пек организацилемен.

Çак тĕслĕхсем акă мĕн çинчен калаççĕ: республика Сывлăх министерстви паха ĕçсем чылай тума палăртать, анчах вĕсене практикăра пурнăçлас тĕлĕшпе ытла та вăраххăн ĕçлет. Хула тата район Совечĕсен исполкомĕсемпе вĕсен сывлăх пайĕсем медицина учрежденийĕсемпе ача яслисенче ĕçсем мĕнле тăнине тĕплĕн пĕлме, çитменлĕхсемпе чăрмавсене пĕтерме çийĕнчех мерăсем йышăнмаççĕ. Медицина учрежденийĕсен руководителĕсенчен хăшпĕрисем пĕтĕм ответлăха туйса ĕçлемеççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн иккĕмĕш сессийĕ Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Сывлăх министерствине, хула тата район Совечĕсен исполкомĕсене сывлăха сыхлас ĕçе ертсе пырассине тĕпренех лайăхлатма хушрĕ. Медицина учрежденийĕсенче тата трахомăран сыватакан пунктсенче йĕркелĕх тума витĕмлĕ мерăсем йышăнмалла. Вĕсем валли хĕллехи вăхăтра хутма топливо çителĕклĕ хатĕрлемелле. Рабочисен общежитийĕсене, халăх çÿрекен ытти вырăнсене (столовăйсене, чайнăйсене, магазинсене) санитари тĕлĕшĕнчен таса тытмалла. Халăх хушшинче санитари пропагандине анлă сармалла. Вар-хырăм чирĕсене тата трахома чирне тĕппипех пĕтерессишĕн кĕрешме медицина работникĕсене пурне те, совет общественноçне мобилизацилемелле.

Çак пысăк задачăсене ăнăçлă пурнăçласси вырăнти Советсен исполкомĕсем тата вĕсен сывлăх пайĕсем хăйсен ĕçне халăхи задачăсем хушнă пек хăвăртрах урăхлатса çĕнетнинчен килет. Вĕсем медицина учрежденийĕсене оперативлă тата конкретлă ертсе пыма тивĕç. Апла пулсан, пĕр-пĕр учреждени руководителĕ патне постановлени е распоряжени ярса панипех çитмест, ĕç мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăрас пулать, хушнă ĕçе пурнăçлас пирки ăна тума тивĕçлĕ çынсенчен хытăрах ыйтас пулать.

Больницăсене, врач пункчĕсене, уйрăмах ялтисене, кадрсемпе çирĕплетмелле. Медицина учрежденийĕсенчи партипе профсоюз организацийĕсен политикăлла-массăллă ĕçе вăйлатмалла. Врачсен, фельдшерсен тата сестрасен семинарĕсене, конференцийĕсене тата кĕске вăхăтлăх курсĕсене ирттерсе, вĕсене малта пыракан врачсен опычĕпе, наука çитĕнĕвĕсемпе паллаштармалла.

Кашни больницăра, поликлиникăра, диспансерта, фельдшер-акушер пунктĕнче кирлĕ пек йĕркелĕх пултăр. Чирлĕ çынсене кăмăллăн йышăнмалла, вĕсене сыватма кучченеçи чи лайăх эмелсемпе, оборудованипе туллин усă курмалла, тĕрлĕ хатĕрсем, кĕпе-йĕм тата ыттисем те çителĕклĕ пулмалла. Çакна тума медицина работникĕсен пуçарулăхне ÿстерни кирлĕ.

Çĕнĕ больницăсем лартас тата киввисене юсас ĕçе вăхăтра пурнăçа кĕртмелле. Çĕнĕ больницăсем лартни, киввисене пысăклатни сывлăха сыхлас ĕçе чылай лайăхлатма май парать. Çавăнпа та вырăнти Советсен исполкомĕсемпе вĕсен сывлăх пайĕсен строительство ĕçĕсене срокра пурнăçлама пур майсемпе те тăрăшмалла.

Сывлăха сыхлас ĕç—совет халăхĕн пурнăçне малалла лайăхлатса пыма пулăшакан пысăк ĕçсенчен пĕри. Медицина работникĕсене пирĕн çĕршывра чи хаклă капитал пулса тăракан çыншăн, унăн сывлăхĕшĕн тăрăшас ĕçе шанса панă. Вĕсен парăхатарлă та хисеплĕ тивĕçĕ медицина учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатасси, сывлăха сыхлас ĕçе çĕнĕ, çÿлĕрех сыпăка çĕклесси пулать.

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем сутаççĕ

Республикăри колхозсем государствăна ахаль шучĕпе тырă, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем тата пахча çимĕçсем чылай параççĕ. Çак ĕç уйрăмах юлашки вăхăтра анлă сарăлчĕ. Кăçал Чăвашпотребсоюзăн Хĕтĕрлĕри управленийĕ урлă колхозсем 9 пин тонна ытла çĕрулми государствăна сутнă. Уйрăмах Йĕпреç районĕнчи колхозсене, колхозниксем çĕрулмипе пахча çимĕçсем чылай сутаççĕ. Пăрачкав районĕнче те çак ĕçе аван йĕркеленĕ.

Республикăри чылай районсенче аш-какай, сĕт-çу государствăна чылай сутаççĕ. Улатăр районĕнчи колхозсем 2.300 центнер, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем 900 центнер ытла государствăна аш-какай сутнă. Республикăра государствăна çĕнĕ хакпа 14 пин центнер ытла аш-какай сутнă. Елчĕк, Муркаш, Вăрнар тата ытти районсенче сĕт-çу парассине уйрăмах аван йĕркеленĕ. Государствăна çăмарта сутас енĕпе те чылай районсенче ÿсĕмсем тунă. Йĕпреç районĕнчи колхозсем 140 пин яхăн, Пăрачкав районĕнчи колхозсем 180 пин çăмарта ытла сутнă. Çапла вара Хĕтĕрлĕри управленийĕ кăçал республикăри колхозсенчен государствăн çĕнĕ хакĕпе пĕр миллион çурă ытла çăмарта сутăн илнĕ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Çĕрулмипе пахча çимĕçсем ытларах лартса тăвас ыйтăва сÿтсе явакан канашлу

Декабрĕн 22-мĕшĕнче Мускавра çĕрулмипе пахча çимĕç ытларах лартса тăвас ыйтупа пухăннă канашлу уçăлнă. Канашлăва Пĕтĕм Союзри В. И. Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх академийĕ, СССР тата РСФСР Ялхуçалăх министерствисем тата Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх обществи пухнă. Канашлу ĕçне наукăпа тĕпчев институчĕсен, сăнав станцийĕсен работникĕсем, агрономсем тата çĕршыври чылай колхозсенчи, МТС-сенчи, совхозсенчи малта пыракансем хутшăнаççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă тăрăх çĕрулмипе пахча çимĕçсем ытларах лартса тăвасси çинчен В. В. Пацнык (СССР Ялхуçалăх министерстви) доклад тунă. Унтан Е. Н. Ушакова академик наукăпа тĕпчев учрежденийĕсен задачисем çинчен каласа панă.

Ялхуçалăх наукисен докторĕ Д. Д. Брежнев (Ÿсентăрансем тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри институтран) тата Пахча çимĕçсем тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн директор заместителĕ М. И. Гусев тата ыттисем те пахча çимĕçсем лартса ÿстерес тĕлĕшпе наука тунă çитĕнÿсем çинчен тата наука учрежденийĕсем çав çитĕнÿсене производствăна кĕртес тĕлĕшпе тума палăртнă ĕçсем çинчен каласа панă.

Ÿсентăрансем тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри институт пысăкрах тухăçлă пулакан пахча çимĕçсен 146 сортне ĕрчетсе кăларнă тата лайăхлатнă. Çĕнĕ сортлă пахча çимĕçсенче сахăр, витаминсем, организма кирлĕ тата ытти япаласем ытларах пулаççĕ, çав çĕнĕ сорт пахча çимĕçсем сивĕне шăраха тата чир-чĕре парăнмаççĕ.

Пахча çимĕçсем тĕлĕшпе ĕçлекен институтра агротехникăн çĕнĕ майĕсене тĕпчесе вĕреннĕ. Пахча çимĕç лартмалли вырăнти тăпрана органикăлла тата минераллă удобренисене хутăштарса тунă компостпа çемçетни уйрăмах пысăк усă парать.

Ленинградри ялхуçалăх институчĕ пахча çимĕçсем лартса тăвас ĕçе механизацилес тĕлĕшпе интереслă опытсем тунă. Грибовски селекци станцийĕн коллективĕ халăх валли çулталăкĕпех чĕрĕ пахча çимĕç пулмалла тăвас тĕлĕшпе ĕçлет.

(ТАСС).

Украина ССР-ĕ. Винница облаçĕнчи нумай колхозсем, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене пурнăçланă хыççăн, потребительсен кооперацийĕ урлă аш-какай, сĕт, çăмарта, пахча çимĕçсем нумай сутнă. Винница облпотребсоюзĕ ялхуçалăх продукчĕсем сутнă колхозсене пама груз турттармалли 200 автомашина кÿрсе килнĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: колхозсене сутма кÿрсе килнĕ автомашинăсем. Малти вырăнта—Ямпольски районĕнчи «Передовик» колхоз председателĕ Д. И. Чалак (сулахайри) колхоз валли çĕнĕ автомашина илет.

Е. КОПЫТ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа изобретательство енĕпе Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетра

Наукăпа изобретательство енĕпе Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет 1953 çулшăн Сталинла премисем илме тăратакан ĕçсене йышăнать.

Пăхса тухма çакăн пек ĕçсене йышăнаççĕ:

А) 1951, 1952 тата 1953 çулсенче пичетленсе тухнă, наукăн аслă общественноçĕ пысăк хак панă наукăлла, научно-популярнăй ĕçсене тата учебниксене (алçырăвĕсене пăхса тухма илмеççĕ);

Б) 1951, 1952 тата 1953 çулсенче халăх хуçалăхĕнче усă курма тытăннă питĕ пысăк изобретенисене тата производство ĕçсен майĕсене тĕпрен лайăхлатнисене.

Маларах кăтартнă ĕçсене наукăлла учрежденисем, аслă шкулсем, министерствăсем, ведомствăсем тата общественлă организацисем тăратаççĕ. Авторсем хăйсем тăратакан ĕçсене йышăнмаççĕ.

1953 çулшăн Сталинла премисем парас тĕлĕшпе сĕнÿсене 1954 çулхи февралĕн 15-мĕшĕччен çак адреспа ямалла: Мускав, Жданов урамĕ, 11, СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа изобретательство енĕпе Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет.

Çĕнĕ магазинсем

Çĕршыври хуласемпе рабочисен поселокĕсенче çĕнĕ магазинсем çĕршер уçнă.

Грузири хуласенче юлашки виçĕ уйăх хушшинче кĕпе-тумтир, атă-пушмак тата çăкăрпа булка сутмалли магазинсем 30 уçнă. Тбилиси хулинче магазинсем чылай уçăлнă.

Кăçалхи çул пуçланнăранпа Караганда хулинче промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç таварĕсем сутмалли 100 магазин уçăлнă.

Луцк хулинче те кăçалхи çул магазинсем чылай уçнă. Кременчуг хулинче (Полтава облаçĕ) промышленность таварĕсем сутмалла магазин уçнă. Усть-Каменогорскра та 5 магазин уçнă. (ТАСС).

Ялхуçалăхĕн механизаци училищисем

Ялхуçалăхĕн механизаци училищисенче пиншер çын вĕренме тытăннă. Училищĕсем çураки тĕлне ĕçе ăста пĕлекен рабочисем нумай вĕрентсе кăлараççĕ.

СССР Культура министерствин профессиллĕ вĕренÿ Тĕп управленийĕнче ТАСС корреспондентне пĕлтернĕ тăрăх, 6 уйăх, пĕр çулталăк тата икĕ çулталăк вĕрентмелли ялхуçалăх механизаци училищисем уçнă. Çак училищĕсем кашни çул механиксем, комбайнерсем, трактористсем, автомобильсемпе тракторсем, комбайнсем тата ытти ялхуçалăх машинисем юсас тĕлĕшпе ĕçлекен рабочисем вуншар пин çын вĕрентсе кăлараççĕ.

Училищĕсенче вĕренекен çамрăксем малта пыракан механизаторсен опытне вĕренеççĕ, агрономи наукин çитĕнĕвĕсемпе паллашаççĕ. Училищĕсенче преподавательсем пулса ĕçлеме специалистсене, трактор бригадисен бригадирĕсене, комбайнерсене уйăрнă. Вĕренекенсем МТС-сенче, совхозсенче тата ялхуçалăх машинисем юсакан заводсенче практикăра пулаççĕ.

Ултă уйăх тата пĕр çулталăк вĕрентмелли ялхуçалăх механизаци училищисене 17 çула çитнĕ тата унтан иртнĕ арçын ачасемпе хĕрсене илеççĕ. Колхозниксене, МТС-семпе совхозсенчи работниксене чи малтан вĕренме илеççĕ. Икĕ çулталăк вĕрентмелли училищĕсене 15—16 çулхи арçын ачасене тата 17 çула çитнĕ хĕрсене—çичĕ çул вĕреннисене илеççĕ. Вĕренекенсене пурне те укçа тÿлеттермесĕр апат çитереççĕ тата тумтир параççĕ.

Ялхуçалăхĕн механизаци училищисенчен вĕренсе тухнă çамрăк специалистсене ĕçлеме машина-трактор станцисемпе совхозсене, пурне те пекех хăйсем ăçтан вĕренме килнĕ районсене яраççĕ.

Суркуннеччен çĕршывра ялхуçалăхĕн механизаци училищисене 800 ытла уçаççĕ. (ТАСС).

Çĕнĕ чугун çул

ХОДЖЕЙЛИ (Кара-Калпак АССР-ĕ), декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Чарджоу-Кунград чугун çулне тăвакансем тата тепĕр участокра—Ходжейли—Шуманай участокĕнче çул туса пĕтернĕ. Енер Шуманай станцине пĕрремĕш эшелон пырса çитнĕ. Касхине Шуманай станцийĕнчен Ходжейли еннелле поезд тухса кайнă.

Шуманай станцинче вокзал, склад çурчĕсем тата платформăсем тăваççĕ.

Хамăр республикăра

Паян МТС-ра

ЧКАЛОВСКИ. Механизаторсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене узловой меслетпе юсаççĕ. Çак меслетпе ĕçлеме МТС лайăх хатĕрленнĕ. Детальсем çума çĕнĕрен пÿлĕм тунă, моторсене тĕрĕслемелли станоксем вырнаçтарса лартнă.

МТС коллективĕ пур тракторсене те 1954 çулхи мартăн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме обязательство илнĕ.

Социализмла ăмăртура моторсем юсакан узелта ĕçлекен А. Михайлов, И. Сиков коммунистсем малта пыраççĕ. Вĕсем МТС-ра вуншар çул ĕçлеççĕ, кулленхи заданине 130—140 процент тултараççĕ. Д. Зимцов коммунист динамо тата магнето юсас ĕçре кулленхи заданине 130 процент тултарать. Çавăн пекех Н. Муллин, А. Суханов, В. Кузнецов рабочисем те ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ, тракторсене лайăх пахалăхпа кăна юсаççĕ.

Агитаторсем тăтăшах калаçусем ирттереççĕ, партипе правительство йышăннă решенисем, тĕнчери лару-тăру тата малта пыракан рабочисен опычĕ çинчен каласа параççĕ. Кашни вунă кунран доклад е лекци пулать, вĕсене квалификациллĕ специалистсем тата КПСС райкомĕн ответлă работникĕсем ирттереççĕ. Нумай пулмасть рабочисем КПСС обкомĕн лекторĕ А. Никитин юлташ тĕнчери лару-тăру çинчен, главнăй агроном М. Смирнов юлташ çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартасси çинчен тунă докладсене итлерĕç.

МТС дирекцийĕ пуçламăш парторганизаци рабочисен пурнăç условисене лайăхлатма тăрăшаççĕ. Кăçалхи кĕркунне кунта 30 çын пурăнмалăх общежити тунă. Общежитине радио кĕртнĕ. Унтах библиотека уçнă.

А. МИНИН,
В. ИГНАТЬЕВ.

Производство çурчĕсене пысăклатмасăрах продукци туса кăларассине ÿстерер

ÇĔМĔРЛЕ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Ленинградри С. М. Киров ячĕпе тăракан «Электросила» завод коллективĕ патриотла çĕнĕ ĕç пуçарчĕ. Вăл технологи процесне лайăхрах йĕркелесе, производство çурчĕсемпе тата оборудованипе туллинрех усă курса, 1954 çулта, кăçалхи планпа танлаштарсан, 40 миллион тенкĕрен кая мар продукци нумайрах туса кăларма социализмла обязательство йышăнчĕ.

Çак патриотла пуçарăва Çĕмĕрлери йывăç япаласем тăвакан завод коллективĕ те тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕ.

СССР Ялхуçалăх министерстви заводăн 1954 çулхи планне, кăçалхи планпа танлаштарсан, 60 процент ÿстернĕ. Уйрăмах МТС-сем валли куçса çÿрекен автомастерскойсем туса кăларасси вăйланать.

Çак кунсенче пулса иртнĕ пухура рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем продукци туса кăлармалли 1954 çулхи плана производство çурчĕсем çĕнĕрен туса лартмасăрах тултарма социализмла обязательство йышăнчĕç.

Завод коллективĕ социализмла ялхуçалăхĕн пур заказĕсене те вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçласа пыма тăрăшать. Парник рамисем обязательствăра палăртнинчен ытларах туса кăларнă.

Завод коллективĕ халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе те хăйĕн пуçарулăхне кăтартать. Юлашки вăхăтра производство каяшĕсенчен этажеркăсем, ача сĕтел-пуканĕ, вешалкăсем, кĕрепле, кĕреçе, варинкке т. ыт. те чылай туса кăларнă. 1954 çулта производство çурчĕсене пысăклатмасăрах 100 пин тенкĕлĕх халăха кирлĕ япаласем туса кăларма пулнă.

Пропаганда работникĕсен семинарĕ

КПСС обкомĕ кăçал партшкулсен преподавателĕсем, партин хула тата район комитечĕсен штатра тăман лекторĕсем, КПСС историйĕ çинчен лекцисем вулакансен семинарне ирттерчĕ.

Унта вĕсем çак темисем тăрăх лекцисем итлерĕç: «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ—совет обществине ертсе, çул кăтартса пыракан вăй», «Халăх массисем—общество аталанăвне тăвакан вăй», «Уйрăм çынсен историри ролĕ», «Совет халăхĕн ырлăхĕшĕн тăрăшасси—Коммунистсен партийĕпе Совет правительствишĕн чи аслă закон», «Украина Россипе пĕрлешнĕренпе 300 çул тултарни» тата тĕнчери лару-тăру çинчен.

Лекцисене семинар занятийĕсене КПСС обкомĕн лекторĕсем, педагогика тата ялхуçалăх институчĕсен преподавателĕсем ирттерчĕç.

ССР Союзĕн медалĕсене пани

1953 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕнче Етĕрне хулинче Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председатель заместителĕ Д. Я. Митьков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн Указĕсем тăрăх наградăланă çынсене медальсем панă.

Ачасене вĕрентес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн Етĕрне районĕнчи Иванькоаăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница В. Г. Кузнецова, Етĕрнери вăтам шкулти учительница О. Г. Никитина, Советски районĕнчи Аслăмăсри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительницăсем Ц. Т. Кутузовăпа Х. А. Ядыкова юлташсем «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль илнĕ.

Етĕрне районĕнчи Ярапассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница М. В. Агакова, Иванькоаăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница К. А. Алексеевцева, Советски районĕнчи Кивĕ Тĕмри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница П. Н. Андреева тата ытти юлташсене «Ĕçри паллăрлăхшăн» медаль панă.

Финанслă кредит ĕçĕнче нумай çул тухăçлă лайăх ĕçленĕшĕн Етĕрне районĕнчи тĕп перекет кассин аслă кассирĕ Е. Н. Голованова юлташ «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль, финанс пайĕнчи аслă инспектор З. Н. Тетерина, инспектор А. М. Ушакова, Советски районĕнчи финанс пайĕн налог агенчĕ А. А. Доронина юлташсем «Ĕçри паллăрлăхшăн» медаль илнĕ.

Д. Я. Митьков юлташ наградăсем илнĕ юлташсене саламлать, малашне ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума ырă сунать.

СССР Верховнăй Сучĕнче

1953 çулхи декабрĕн 18—23-мĕшĕсенче СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ судăн хупă ларăвĕнче, 1934 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче кăларнă Закона палăртнă йĕркепе, Л. П. Берияна тата ыттисене айăпламалли уголовнăй ĕçе пăхса тухнă.

СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕн составĕнче çаксем пулнă:

Председателĕ — Специальнăй Суд Присутствийĕн Председателĕ Совет Союзĕн Маршалĕ И. С. Конев тата Присутстви членĕсем: Пĕтĕм Союзри Профессисен Союзĕсен Центральнăй Совечĕн Председателĕ Н. М. Шверник, СССР Верховнăй Суд Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ Е. Л. Зейдин, арми генералĕ К. С. Москаленко, КПСС Мускав область комитечĕн Секретарĕ Н. А. Михайлов, Грузири Профессисен Союзĕсен Совечĕн Председателĕ М. И. Кучава, Мускав хула Сучĕн Председателĕ Л. А. Громов, СССР Шалти ĕçсен министрĕн пĕрремĕш заместителĕ К. Ф. Лунев.

Айăпласа çырни тăрăх Л. П. Берияна, РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 58-1 «б», 58-8, 58-13, 58-11 статьисенче каланă преступленисем тунăшăн айăпласа; В. Н. Меркулова, В. Г. Деканозова, Б. З. Кобулова, С. А. Гоглидзене, П. Я. Мешика, Л. Е. Влодзимирские, РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 58-1 «б», 58-8, 58-11 статьисенче каланă преступленисем тунăшăн айăпласа, суда панă пулнă.

Суд следствийĕ малтанхи следствин материалĕсене тата суд умне тăратнă çынсем пирки айăпласа çырнинче каланисене пĕтĕмĕшпех çирĕплетсе панă.

Суд çакна палăртнă: Тăван çĕршыва сутса тата ют çĕршыв капиталĕн интересĕсемшĕн тăрăшса, судпа айăпланакан Берия Совет государствишĕн тăшман пулса тăракан каварçăсен сутăнчăкла ушкăнне тунă. Çав ушкăна судпа айăпланакансем В. Н. Меркулов, В. Г. Деканозов, Б. З. Кобулов, С. А. Гоглидзе, А. Я. Мешик тата Л. Е. Влодзимирский кĕнĕ. Вĕсем нумай çулсем хушши пĕрле преступникла ĕçсем тунă май Берияпа çыхăнса тăнă пулнă. Каварçăсем Шалти ĕçсен министерствин органĕсемпе Коммунистсен партине хирĕç тата СССР Правительствине хирĕç усă курас тĕллев, влаçа хăйсен аллине тытса илме, рабочисемпе хресченсен совет стройне пĕтерме, капитализма каялла тавăрма тата буржуази пуç пулса тăмалла тума Партипе Правительствăна Шалти ĕçсен министерствине пăхăнтарас ирсĕр тĕллев лартнă.

Суд çакна палăртнă: Л. П. Берия граждан вăрçи вăхăтĕнчех преступникла сутăнчăкла ĕçсем тума тата ют çĕршыв разведкисемпе çыхăну тытма пуçланă. 1919 çулта Л. П. Берия Бакура пулнă чухне, Азербайджанри контрреволюцилле муссаватистла правительство разведкин вăрттăн агенчĕ пулса ĕçлеме кĕрсе, сутăнчăкла ĕç тунă,—çав разведкăна Англин разведка органĕсем контроллесе тăнă пулнă.

1920 çулта Грузире пулнă чухне Л. П. Берия каллех сутăнчăкла ĕç тунă. Вăл Грузири меньшевиксен правительствин охранкипе, Англи разведкин филиалĕ пулса тăнăскерпе, вăрттăн çыхăну тытнă.

Ун хыççăнхи çулсенче хăйне арестличчен Л. П. Берия ют çĕршывсен разведкисемпе вăрттăн çыхăну тытнă тата çав çыхăнусене сарса пынă.

Л. П. Берия тата унăн ирсĕр ĕçне хутшăнниксем хăйсен тăшманла ĕçĕсене нумай çулсем хушши тĕплĕн пытарса пурăннă.

И. В. Сталин вилнĕ хыççăн, империалистсен реакцилле вăйĕсем Совет государствине хирĕç тăвакан хăйсен ĕçĕсене активлатни çине тайăнма шутласа, Л. П. Берия Советсене хирĕçле хăйĕн сутăнчăкла ĕмĕчĕсене пурнăçлама васкаса ĕçлеме пуçланă, çавă вара Л. П. Берияна тата унăн ĕçне хутшăнакансене кĕске вăхăтра тăрă шыв çине кăларма тата вĕсен преступникла ĕçĕсене пĕтерсе лартма татăклă мерăсем йышăнма май панă.

1953 çулхи март уйăхĕнче СССР Шалти ĕçсен министрĕ пулса тăрса, судпа айăпланакан Л. П. Берия, влаçа хăйĕн аллине илме хатĕрленсе, каварçăсен ушкăнне хутшăнакансене васкаса Шалти ĕçсен министерствин центральнăй аппарачĕнчи, çавăн пекех унăн вырăнти органĕсенчи ертсе пыракан вырăнсене лартма тытăннă. Л. П. Берия тата унăн ирсĕр ĕçне хутшăнакансем Шалти ĕçсен министерствинчи тӳрĕ кăмăллă работникĕсене—каварçăсен преступникла распоряженийĕсене пурнăçлама килĕшмен работниксене хĕсĕрленĕ.

Советсене хирĕçле, сутăнчăкла тĕллевсемпе Л. П. Берия тата унăн ĕçне хутшăннисем союзлă республикăсенче буржуазлла националистла элементсен юлашкисене вăйлатма, ССР Союзĕнчи халăхсем хушшинче хирĕçӳ кăларма, чи малтанах, ССР Союзĕнчи халăхсемпе аслă вырăс халăхĕ хушшинчи туслăха хавшатма преступникла чылай ĕçсем тума хăтланнă.

Совет халăхĕн чи усал тăшманĕ пулса, судпа айăпланакан Л. П. Берия, пирĕн çĕршывра апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен йывăрлăхсем тăвас тĕллев тытса, Партипе Правительство колхозсемпе совхозсен хуçалăхне вăйлатас, совет халăхĕн пурнăçне пĕрмай лайăхлатса пырас тĕлĕшпе тăвакан питех те кирлĕ ĕçсене пурнăçлама чăрмантарнă, саботаж тунă.

Çакна палăртнă: хăйсен преступникла ĕçĕсене тĕплĕн пытарса, судпа айăпланакан Л. П. Берия тата унăн ĕçне хутшăннисем хăйсене тăрă шыв çине кăларма пултаракан çынсенчен шикленсе, çавăн пек çынсем тĕлĕшпе терророла ĕçсем тунă. Л. П. Берияна тата унпа пĕр каварлисене Совет государствине хирĕç тăшманла ĕçсем тума чăрмантаракан тата вĕсене влаçа хĕсĕнсе кĕме чăрмантаракан тӳрĕ кăмăллă партипе совет работникĕсене хирĕç кĕрешме каварçăсем элеклес, хирĕçӳсем кăларас, тĕрлĕ провокацисем тăвас тĕп меслет суйласа илнĕ.

Суд çакна палăртнă: судпа айăпланакан Л. П. Берия, В. Н. Меркулов, В. Г. Деканозов, Б. З. Кобулов, С. А. Гоглидзе, П. Я. Мешик тата Л. Е. Влодзимирский, хăйсем Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн—Государство хăрушсăрлăх министерствин—Шалти ĕçсен министерствин органĕсенче ĕçленипе усă курса, Коммунистсен партийĕпе Совет влаçне парăнса тăракан тӳрĕ кăмăллă кадрсене вĕлерсе пĕтерес тĕлĕшпе пысăк преступленисем чылай тунă.

Суд çавăн пекех тата Л. П. Берия моральпе тĕлĕшĕнчен питех те пăсăлса кайнине кăтартса паракан преступленисене тата Берия хăйне усă курас ĕмĕтпе тата влаçра тăнипе усă курса преступникла ĕçсем туни çинчен калакан фактсене те палăртнă.

Судра чăн-чăн документсем тăрăх, айăплă ĕç туни кăтартакан япаласене курса, айăпланакансем хăйсен аллипе çырса хунисем, нумай свидетельсем каласа панисем тăрăх судпа айăпланакансен айăплă ĕçсене чăнах туни пĕтĕмпех татăклăн палăрнă.

Вĕсем айăплă пулнине тăрă шыв çине кăларнă май судпа айăпланакансем Л. П. Берия, В. Н. Меркулов, В. Г. Деканозов, Б. З. Кобулов, С. А. Гоглидзе, П. Я. Мешик тата Л. Е. Влодзимирский хăйсем малтанхи следствире каланине суд следствинче те каланă, хăйсем государствăна хирĕç питĕ пысăк айăплă ĕçсем чылай туса айăпа кĕнине йышăннă.

СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ судпа айăпланакан Л. П. Берия çавăн пек айăпа кĕнине палăртнă—вăл Тăван çĕршыва хирĕç сутăнчăкла ĕçсем тунă, влаçа хăй аллине ярса илес тата каллех буржуази пуç пулса тăмалла тăвас тĕллевпе Совет влаçне хирĕç каварçăсен ушкăнне организациленĕ; Коммунистсен партине тата Совет Союзĕнчи халăхсене чунтан-чĕререн парăннă политикăлла деятельсене хирĕç террористла ĕçсем тунă; 1919 çулта Бакура рабочисен революцилле юхăмне хирĕç активлă кĕрешнĕ, ун чухне Берия Азербайджанри контрреволюцилле муссаватистла правительствăн разведкинче вăрттăн агент пулса ĕçленĕ, унта ют çĕршыв разведкипе çыхăннă, ун хыççăнхи вăхăтра, хăйне тăрă шыв çине кăларса арестличченех, ют çĕршывсен разведкисемпе преступникла вăрттăн çыхăну тытса пурăннă тата çав çыхăнăва сарса пынă, урăхла каласан, РСФСР Уголовнăй кодексĕн 58—1 «б», 58—8, 58—13, 58—11 статьисенче каланă преступленисем тунă.

Судпа айăпланакансем В. Н. Меркулов, В. Г. Деканозов, Б. З. Кобулов, С. А. Гоглидзе, П. Я. Мешик тата Л. Е. Влодзимирский çакăн пек айăплă ĕçсем тунине палăртнă—вĕсем Тăван çĕршыва хирĕç сутăнчăкла ĕçсем тунă, террористла ĕçсем тунă тата Советсене хирĕçле сутăнчăкла ушкăна хутшăннă, урăхла каласан, РСФСР Уголовнăй кодексĕн 58—1 «б», 58—8, 58—11 статьисенче каланă преступленисем тунă.

СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ çапла йышăннă:

Л. П. Берияна, В. Н. Меркулова, В. Г. Деканозова, Б. З. Кобулова, С. А. Гоглидзене, П. Я. Мешика, Л. Е. Влодзимирские уголовнăй йĕркепе айăпласа чи пысăк наказани памалла—персе пăрахмалла, вĕсен хăйсен пурлăхне конфискацилемелле, вĕсен çар званийĕсене тата наградисене пăрахăçа кăлармалла туса приговор йышăннă.

Приговор татăклă, ун пирки жалоба памалла мар.

Приговора пурнăçа кĕртнĕ

СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ Л. П. Берия, В. Н. Меркулов, В. Г. Деканозов, Б. З. Кобулов, С. А. Гоглидзе, П. Я. Мешик тата Л. Е. Влодзимирский пирки йышăннă приговора: вĕсене уголовнăй йĕркепе айăпласа чи пысăк наказани памалла—персе пăрахмалла тунине ĕнер, декабрĕн 23-мĕшĕнче, пурнăçа кĕртнĕ.

Пĕр шухăшлă пулса ырлаççĕ

Шупашкарти чăлха фабрикин хĕрлĕ кĕтесне ĕнер каçхине рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем пуçтарăнчĕç.

Пухура КПСС Шупашкар хула комитечĕн представителĕ Мастерова юлташ СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ Берияна тата унпа пĕркаварлă тăшмансен виревсĕр ĕçĕ пирки йышăннă приговор çинчен каласа пачĕ.

Пухура кадрсен пайĕнче ĕçлекен Болвина, сыхакан цехри старши мастер Каменецкий, фабрикăри партбюро секретарĕ Рябков юлташсем сăмах тухса каларĕç.

Пухура пулнисем Берия тата унпа пĕр каварлă тăшмансем пирки йышăннă приговора тата ăна пурнăçа кĕртнине чĕререн ырласа резолюци йышăнчĕç, революцилле сыхăлăха ӳстерме, Тăван çĕршывăн оборона вăй-хăватне хăватлатма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулчĕç.

Районти хаçатсене пăхса тухни

Çуракине хатĕрленес ыйтусене куллен çутатса пымалла

Çураки çывăхлă пуласси кăна иртерме хĕл кунĕсенче тĕплĕн хатĕрленнинчен килнине пурте пĕлеççĕ. Анчах та республикăра чылай колхозсемпе МТС-сенче çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе халлĕхе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Машина-трактор станцийĕ ялхуçалăх ĕçĕсене татса паракан вăй пулса тăрать. Хăшпĕр МТС директорĕсем çавăн çинчен манаççĕ, хăйсен ответлăхне туйса ĕçлемеççĕ. КПСС Чăваш обкомĕн декабрĕн 9—10-мĕшĕсенче пулса иртнĕ VIII-мĕш пленумĕ Çĕмĕрле, Куславкка, Муркаш, Калинино, Первомайски тата Етĕрне районĕсенчи МТС-сем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсаса çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе питех те сӳрĕккĕн ĕçленине палăртрĕ. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе асăннă МТС-сенче ĕç япăх пырать пулин те, районти хаçатсем ун çинчен пĕр сăмах та шарламаççĕ. Çав районсенчи хаçатсем МТС-сенче мĕнле ĕçсем мĕн пирки юлса пынине, кам лайăх, кам япăх ĕçленине кăтартса витĕмлĕ материалсем пичетлесен, питех те вырăнлă пулмалла. Апла пулин те кунта каланă районсенчи хаçатсенчен, Куславкка районĕнчи «Ленин ялавĕпе» хаçатсăр пуçне, пĕри те çак уйăхри номерсенче МТС ĕçĕсем çинчен çырмарĕç. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе вăхăтра та лайăх тума механизаторсене мобилизацилесси — хаçатсен паянхи чыслă тивĕçĕ пулнине чылайăшĕ манаççĕ.

Хăшпĕр районсенче халĕ те вăрлăх хатĕрлесе çитермен. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле, Советски районĕсенчи колхозсем юлса пыраççĕ. Çак районсенчи хаçатсен вăрлăх хатĕрлес ыйту çинчен, паллах, номертен номере материалсем пичетлемелле, ку ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме парторганизацисене пулăшмалла. Анчах асăннă районсенчи хаçатсен юлашки номерĕнче çавăн пек материалсем çукпа пĕрех. Декабрĕн 17-мĕшĕнче тухнă номерте çеç Советски районĕнчи «Совет ялавĕ» хаçат Асламасри Ленин ячĕпе тăракан колхоз çинчен «Çураки çинчен шутламаççĕ» ятлă пĕр пĕчĕк информаци пичетленĕ. Ăна вуласан тата хаçатăн ытти номерĕсене пăхса тухсан, ку хаçат редакцийĕн ĕçне те çавăн пек сăмахсемпе хаклас килет—хаçат калани хăйне те пырса тивет.

«Сĕнтерӳ çулĕпе» тата «Социализмла ĕç» хаçатсенче те тĕлĕнмелле лăпкăлăх палăрать, вĕсем те вăрлăх пирки çырмаççĕ.

Кувакино, Улатăр, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсенче уя тислĕк кăларас ĕç ытлах та юлса пырать. Ку районсенче тислĕке хакламанни иртнĕ çулсенче те пулнă. Районри хаçатсем çавна курмаççĕ, уя тислĕк, торф кăларас, ытти тĕрлĕ удобренисем хатĕрлес ыйтăва хускатмаççĕ. Шăмăршă районĕнчи «Сталин ялавĕ» хаçатăн декабрĕн тухнă малтанхи пиллĕк номерне пăхса тухсан, унта çураки пирки пĕртен-пĕр статья — декабрĕн 10-мĕшĕнче тухнă уместатьяна çеç куратăн. Вăл та шупкарах. Удобренисем пирки статьяра мĕн пурĕ те çапла çеç каланă:

«Вăйлă тырпул туса илме удобренисем нумай кирлĕ. Органикăлла удобренисем пухма тăрăшмалла, компостсем тумалла, торф нумайрах кăлармалла, минераллă удобренисем кирлĕ чухлĕ тата вăхăтра кӳрсе килмелле».

Паллах, çавăн пек пĕтĕмĕшле тата никама та пырса тивмен сăмахсемпе çеç калани çителĕксĕр, вăл колхозниксене уя тислĕк кăларас ĕçе мобилизацилеме пулăшаймасть. Чăтма çук юлса пыракан ĕç пирки районри хаçат витĕмлĕ сăмах калама тивĕçлĕ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ытти тĕрлĕ ĕçсем те нумай. Вăхăт çур хĕле çитет—уйра юр çук. Çавăнпа та уйра юр тытасси хĕллехи агротехникăлла ĕçсем хушшинче кăçал пысăк вырăнта пулмалла. Районри хаçатсенче хĕллехи агротехникăлла ĕçсем çинчен час-часах материалсем памалла.

Чылай хаçатсем агротехника курсĕсен ĕçĕ çинчен те материалсем пичетлемеççĕ. Çав вăхăтрах нумай колхозсенче массăллă кадрсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе хаваланни пур. Хăшпĕр хаçатсем колхозсене ĕçлеме кайнă агрономсемпе зоотехниксен ĕçĕ çинчен те нимĕн те çырмаççĕ. Вĕсене пĕр-пĕрин опычĕпе паллаштарни халĕ питех те кирлĕ пулнă пулĕччĕ.

Нумаях пулмасть Мускавра облаçсенчи, крайсенчи тата республикăсенчи хаçат редакторĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Çав канашлура КПСС Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ ялхуçалăхне малалла вăйлатас тĕлĕшпе партипе правительство палăртнă мероприятисене пурнăçлас ĕçре совет пичечĕ пысăк вырăн йышăннине палăртрĕ. Çавăнпа пĕрлех Н. С. Хрущев юлташ ялхуçалăх ыйтăвĕсене çутатас ĕçре хаçатсем тăвакан йăнăшсемпе çитменлĕхсене кăтартса пачĕ. Хаçатсемпе журналсем,—терĕ вăл,—Центральнăй Комитет Пленумĕ кăларса тăратнă задачăсене халех ĕнтĕ татса панă пек кăтартма пăхаççĕ. Çавăн пек лăплансa ларни вăл ĕçе сиен кӳме кăна пултарать. Çитменлĕхсене хирĕç активлă кĕрешмелле.

Çапла каланисем пирĕн хаçатсене тӳрремĕнех пырса тиveççĕ. Хаçатсенче ялхуçалăх ыйтăвĕсене çутатассинче татăклă улшăну тумалла.

КПСС Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ республикăра çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тума кирлине тĕплĕн кăтартса пачĕ. Районри хаçатсен çав задачăсене пурнăçа кĕртме парторганизацисене тивĕçлипе пулăшмалла.

Редакцие килнĕ çыру

Радио хăçан пулать-ши?

ЧУРАЧĂК. «Прогресс» колхоз руководителĕсем колхозниксен йăла условийĕсене лайăхлатасси çинчен сахал шухăшлаççĕ. 2-мĕшпе 3-мĕш бригадăсенче радио кĕртме тытăнни 6 уйăх ытла иртрĕ, анчах паян кун та ĕçе вĕçлесе çитермеççĕ. Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă тĕле радио пулать тесе, колхозниксем хавасланса радио кĕртме юпасем лартса тухрĕç. Колхозăн хăйĕн радиоузел пур. Кирлĕ хатĕрсем пурте çителĕклĕ. Колхозниксем юпасем лартса пĕтерсен, монтерсем пралуксем карса хучĕç. Колхозниксем пысăк ĕмĕтпе хаваслăнчĕç, нумайăшĕ репродукторсем илсе хатĕрлерĕç.

Паянхи куна çитсе те колхозниксене радио кĕртсе памарĕç. Юлашки вăхăтра колхоз председателĕ Л. Степанов юлташ колхозниксен ĕмĕтне пачах хуçса хучĕ. Радио кĕртме лартнă юпасене, строительство материал çук тесе, çил арманне юсама каялла кăларма пуçларĕç. Нумай вырăнта карнă пралуксем те татăлнă, унта-кунта суллана тăраççĕ.

П. ИВАНОВ,
учитель.

Клубри йĕркесĕрлĕхсем

Шупашкарти «Энергия» клуба кино курма халăх алăна йышлăн пухăнать. Кунта пурнăçлăн ниха заводра ĕçлекенсем пулаççĕ. Хулари ĕççыннисем те час-часах пыраççĕ. Шăматкун тата вырсарникун уйрăмах халăх нумай пулать. Анчах клубра йĕркесĕрлĕхсем питĕ нумай.

Иртнĕ вырсарникун кунта «Застава в горах» ятлă кинофильм кăтартрĕç. Çак çĕнĕ илемлĕ фильма курма пыракансен, яланхи пекех, нумай тарăхма тиврĕ.

Билетсем сутмалли касса клуба кĕнĕ çĕрте вырнаçнă. Кунта питĕ тăвăр, клуба кĕрсе кайма та хĕн, Иртсе çӳремелли вырăн хĕсĕк пирки, касса патнелле аран-аран хĕсĕнкелесе кĕретĕн. Кĕç-кĕç пальто тӳмисем татăлса ӳкĕç, тейĕн. Черетре ним йĕрки те çук. Кам вăйлăрах—çавă билет хăвăртрах илме пултарать. Билет сутнă çĕрте шăв-шав янăраса тăрать. Кунта кино курма билет сутнине пĕртте ĕненес килмест.

Çак йĕркесĕрлĕхсемпе клуб директорĕ Нерубенко юлташ тата клубра ĕçлекен ытти работниксем те килĕшсе çитнĕ пулас. Вĕсемшĕн пулсан, çак йĕркесĕрлĕхсем нимех те мар иккен. Нерубенко юлташ каласа панă тăрăх, кунта билет сутакан пӳлĕм чӳречисем, çăрасем çĕмĕрлнисем те пулкаланă.

Çав тери ушаланса билет илнĕ хыççăн кино курма пыракансем фойене кĕреççĕ. Кунта та иртсе çӳреме канăçсăр, ларса канма пукан сахал.

Бĕçех кино пуçланас вăхăт çитрĕ: 18 сехет те 15 минут. Анчах кино пуçланмасть-ха. Çынсем хумханма тытăнаççĕ. Афишăсем çинче кăтартнă кино пуçланмалли вăхăт çитсен тепĕр 15 минутран кăна çынсене кинозала кĕртме тытăнчĕç.

Акă каллех пуçланчĕ шăв-шав. Пĕри те тепри маларах кĕрсе вырăн йышăнасшăн. Кунта та, билет касси умĕнчи пекех, аран-аран хĕсĕнкелесе кĕретĕн.

— Мĕншĕн-ха капла?

Кунта кино курма пыракансем билет çинче кăтартса панă вырăнсене тупма йывăрринне пĕлсе çитнĕ. Çавăнпа та вĕсем хăйсен вырăнне хăвăртрах йышăнма тăрăшаççĕ, çитменнине тата пĕр вырăн çинех икшер билет сутнисем те пулкалаççĕ.

Ку çеç те мар иккен. Билетра кăтартса панă вырăнсене тупма питĕ канçĕр—пукансене йĕркеллĕ вырнаçтарса лартман. Сăмахран, «А» рет вырăнĕнче 9-мĕш ретларать, 14-мĕшпе 15-мĕш ретсенчи пĕр тĕлти вырăнсемех—пĕри 16-мĕш, тепри вара 4-мĕш вырăн шутланаççĕ. Курма пыракансем хăйсен вырăнĕсене шыраса калле-малле чупаççĕ, анчах вĕсене клуб работникĕсем пулăшмаççĕ.

— Кунта пĕр пуканĕ çĕмĕрĕлнĕ-ске. Ун çине ларма та май çук вĕт,—кăшкăрать пĕри.

— Чим-ха, чим, юсавлине илсе килсе парăпăр,—ответлет ăна контролĕрша.

Бĕçех юсавлă пукан илсе пырса çав çынна вырнаçтарчĕç. Нумаях та вăхăт иртмест, тухса çӳремелли вырăнта тепĕр рет пулса тăрать. Мĕншĕн тесен залра çĕмĕрĕлнĕ пукансем чылай иккен. Унсăр пуçне тата, Нерубенко юлташ каланă тăрăх, билет илекенсене хĕрринчи вырăнсем лекнĕ пулсан, вĕсене тухса çӳремелли вырăнта ларма урăх пукансем параççĕ.

Кунта çакăн пек тĕслĕх те пулнă: пилĕк тенкĕлĕх билетсем сукнине пула, виç тенкĕлĕх билетсене пилĕкшер тенкĕпе сутнă.

Басхи сеансем уйăннă вăхăтра кинозала шăлса тасатмаççĕ, уçăлтармаççĕ. Тепĕр чухне кино та йĕркеллĕ кăтартмаççĕ: пайсем хушшинче экран çинче пушă вырăнсем курăнаççĕ.

Профсоюз завкомĕпе заводри комсомол комитечĕ клубри йĕркесĕрлĕхсем çине çаврăнса пăхмаççĕ.

Клуб дирекцийĕ кăçал пахă пуçару тунăччĕ: ĕççыннисем ыйтнипе иртнĕ çулсенче кăтартнă кинофильмсене тепĕр хут кăтартма тытăннăччĕ. Анчах юлашки вăхăтра ун пек тумаççĕ, мĕншĕн тесен Главкинопрокат кантурĕ клуб ыйтнă кинофильмсене вăхăтра парса тăмасть. Унсăр пуçне, Главкинопрокат кантурĕ фильмсене парса янă чухне вăл мĕн чухлĕ вăхăт хушши пынине кăтартса памасть. Çавна пула, çĕнĕ кинофильмсем кăтартнă чухне, уйрăмах малтанхи кунсенче, сеанссене кирлĕ пек йĕркелесе тăраймаççĕ.

Ĕççыннисем клуба хăйсен вăхăтне савăнăçлă та культурăллă иртерме пыраççĕ. Вĕсем предприятисемпе учрежденисенче тăрăшса, пархатарлă ĕçленĕ хыççăн кăмăлла каякан кинофильмсем курасшăн, концертсем итлесшĕн.

Г. АНДРЕЕВ.
В. МАКСИМОВ.

Пысăк тупăш

МУРКАШ. Энгельс ячĕпе тăракан колхоз общественлă выльăх-чĕрлĕхрен тупăш нумай илет. Кăçал колхоз сысна çурисем сутса 100 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Кашни ĕнерен 1.400—1.500-шер литр сĕт суса илнĕ. Колхоз государствăна сĕт-çу памалли обязательствăна сентябрь уйăхĕнчех иртерсе тултарнă.

П. ЯКОВЛЕВ.

КВАРТАЛТИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂ

Кире вăрманпромхозĕн коллективĕ хăйсен IV-мĕш кварталти плана—срокчен, декабрĕн 19-мĕшĕ тултарнă. [illegible] касса хатĕрлемелли плана—115 процент, турттарса кăлармалли плана 100,5 процент тултарнă. Халĕ рабочисем султалăкри плана тултарассишĕн вăй хураççĕ.

Анлă професси

Кун каçа ĕçленĕ хыççăн, колхозниксем правление пухăнчĕç. Пĕрисем хаçат вулаççĕ, радио итлеççĕ. Теприсем ыранхи ĕç çинчен калаçаççĕ.

— Федор Исаевич!—терĕ вĕсенчен пĕри.—Хаçатра эсир 550 тонна авăн çапни çинчен çырнă.

— Вулярăм-ха эпĕ ăна. Анчах темшĕн пурне те кĕртмен унта. Сентябрь уйăхĕнчех 700 тонна çапнăччĕ.

• • •

Вунултă çул каялла, Сĕнтĕрте МТС пулсан, Турай уйне тракторсем пынă. Унтах Федор Исаев плугпа суха тунă. Вăл, машинене кантарма тăратнă та, трактор хыççăн тикĕрсе пăхса тăнă. Лешĕ питĕ тӳрĕ пынă, тикĕс сухаланă. Тăрăн та сарлака касăсем хăма пек тӳрем выртса пынă. Писсе çитнĕ çĕр çинче сурхи тĕтре выляять. «Мĕн тери машина çынна пăхăнать пулать. Эпĕ те тракторист пулсан...»—шухăшланă вăл.

Трактористсем кăнтăрлахи апата ларсан, Федор Исаев вĕсем патне пынă. Чылайччен калаçнă вăл. Анчах хăйĕн шухăшне уçрех уçса калаиман. Кулăшла пулхасран именнĕ. Вара сăмах майĕн çапла ыйтнă:

— Нумай ĕç-тăм кирлĕ пулĕ ку машинăна вĕренсе пĕлме. Пурне те алла пăхнăкера пулĕ вăл?

— Хăвăлу пултăр. Чăтăмлăх çитсĕр, Вара эсир те тракторист пулатăр,—тенĕ трактористсем.

—«Эпĕр те тракторист пулатпăр»,—çак сăмахсене Федор Исаевă халĕ [illegible].

Хирте хĕрӳллĕ ака пынă. Писсе çитнĕ çĕр çинче сурхи тĕтре вылянă. «Эпĕ те тракторист пултăм»,—тытса пынă тракторне Федор Исаев. Пĕр тикĕс касăлса, çаврăна-çаврăна выртса пыракан суха кассисем пурнăç листине усăн тăчăнă. Çак кун унăн ĕмĕрлĕхех асра юлнă.

Халĕ Федор Исаев ăста тракторист кăна мар, вăл комбайнер тата молотилка машинисчĕ.

Кашни ĕç хăйĕн черечĕпе пынă. Трактористсем ака пĕтерне хыççăнах çĕртме тума тытăннă. Хирте хӳхĕм тырă ӳснĕ. Комбайнерсем хĕрсе агрегатсене йĕркеленĕ.

— Исаев юлташ!—тенĕ çав хĕрӳллĕ кунсенчен пĕринче МТС директорĕ,—тракторне лайăхрах хатĕрлĕр. Кĕçех комбайнпа тырă вырма каятăр.

— Тракторĕ хатĕрех-ха вăл. Ушшăн чăрмав çук. Комбайн пирки пĕлместĕп вара,—тенĕ тракторист.

— Ун пирки урăххисем...

Акă хир тинĕс пек хумханнă. Трактор хыççăн «Коммунар» мăнаçлăн шăвнă. Тырă уйĕ çаралнăçем çаралса пынă. Колхозниксем лав хыççăн лав тырă турттарнă. Хирĕç кăнкă çил вĕрнĕ. «Каçчен ку участока вырса пĕтеретпĕр те тепĕр уя куçатпăр» — шухăшланă тракторист.

— Чарăнăр-р-р!—сасартăк илтĕннĕ сасă хыçалтан.

Тракторист хавхан çаврăнса пăхнă. Комбайнер аллине сулса, чарăнма кирлине пĕлтернĕ.

— Вырса пĕтерер ĕнтĕ кăна!—тенĕ тракторист.

— Сук-ха, вăхăт пулнă,—ответленĕ комбайнер.

Вăл кун мар, тепĕр кунне те комбайн урăх участок çине куçайман. МТС-ран механик пырсан çеç кăлтăка тӳрлетсе ĕçе янă. Çамрăк комбайнер кăтĕс техникăна çителĕксĕр чухланă имĕш.

Кун пек чăрмавсем авăн çапнă чухне те пулкаланă. Трактор кал-кал ĕçленĕ. Анчах молотилка тикĕс ĕçлемен пирки, пĕре кăна мар чарăнса тăма, вăхăта ахаль иртерме тивнĕ.

— Мĕнле ку капла?—ыйту лартнă Федор Исаев.—Калăпăр, пĕри тракторист, тепри комбайнер, виççĕмĕшĕ молотилка машинисчĕ. Анчах никăшĕ те пĕр-пĕрин ĕçĕсене пĕлместпĕр, хирĕç-хирĕç пулăшаймастпăр. Тикĕс ĕçлеменшĕн вара колхозниксем, пурин çине те пĕр пекех çилленеççĕ. Тек кун пек пулса пыма пултараймасть. Пирĕн кашниннех агрегатри пур машинăсемпе те ĕçлеме, кирлĕ чухне вĕсене тӳрлетме пĕлмелле.

Хĕллехи кунсенче е ытти чухне ĕçрен пушă вăхăтра Федор Исаев тракторист «Коммунар» комбайнпа ĕçлеме çине тăрсах вĕренет. Вара МТС дирекцине пынă та:

— Çитес çул мана трактор кăна мар, комбайн та шанса пама пултаратăр, — тенĕ.

Инженерсемпе механиксем унăн пĕлĕвне тĕплĕн тĕрĕсленĕ. МТС дирекцийĕ ăна комбайнер пулнине ĕнентерсе документ панă.

Федор Исаев «МК-1100» молотилкăпа ĕçлеме те хăй тĕллĕн вĕренет. Халĕ механизатор виçĕ машина çинче ĕçлеме, вĕсене тӳрлетме те, кăлтăксене ĕçре сиксе тухма та ăста пĕлет. МТС çĕнĕрен техникăпа пуянланса пырать. Исаев вĕсене çийĕнчех вĕренсе, алла илсе пырать.

Федор Исаевич хăй ĕçлекен мур машинăсем çинче те ĕç тухăçлăхне тăтăшах ӳстерсе пырать. [illegible]

Халĕ вăл иккĕмĕш çул «МК-1100» молотилкăпа авăн çапать. Советскинчи çĕнĕ МТС-ра çак машинăна станцăран тӳрех бригадăна илсе пынă, Федор Исаева панă. Унтанпа молотилка МТС картишне юсава кĕмен, ăна машинист юсавлă тытса пырать.

Пĕлтĕр Федор Исаев планран ирттерсе 400 тонна тырă çапса панă. Кăçал 600 тонна çапма пулнă. Исаев ертсе пыракан трактор бригади Ленин ячĕпе, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсенче ĕçлет. Ку колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене çулсеренех калăпа иртерсе пыраççĕ. Çакă вăл механизаторсен пархатарлă ĕçĕнчен нумай килет.

Хирте тырă писсе çитнĕ. Колхозниксем хĕрӳллĕ ĕçе пикеннĕ. Вырнă хыççăнах кĕлте кĕртнĕ. Федор Исаевăн молотилка агрегачĕ авăн çапма хатĕрех тăнă. Çав вăхăтрах Ленин ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ государствăна тырă пама, вăрлăх хывма график илнĕ.

— Федор Исаев кăçал та ята ямĕ-ха,—калаçнă колхоз правленийĕнче.

Шаннине куçпа курса ĕненес тесе, колхоз председателĕпе партбюро секретарĕ Столяровпа Исаев юлташсем итем çине пынă. Молотилка агрегачĕ кĕç-вĕç çапма тытăнас пек тăнă.

— Ну, Федор Исаевич!—тенĕ вĕсем.—Хĕрӳллĕ ĕçсем пуçланчĕç. Çак ĕçри йывăрлăх сирĕнтен нумай килет. Шанатпăр сире.

— Ырă сăмахăршăн тавах. Анчах хăвăртăн мĕн кирли те хатĕрех пултăр,—тенĕ молотилка машинисчĕ.

Тепĕр кунне агрегат шуçăм килнĕ вăхăтрах ĕçлеме пуçланă. Колхозниксем лав хыççăн лав тырă ăсатнă. Каç пулсан Иван Федоров весовщик [illegible] вĕçленĕ.

— Иĕ норма ытла—35 тонна!—[illegible] тенĕ вăл.

[illegible]

— Тăхтăр-ха пăртакках,—тенĕ вĕсене Федор Исаев.—Пархатарлă ĕç хыççăн сăмах хускатмасăр мĕнле салалас.

Колхозниксем паян купаланă сӳлĕ те вăрăм улăм урисем, ретĕн-ретĕн ларса тухнă тырă капанĕсем çине кăмăллăн пăхса илнĕ.

— Пуçламăшĕ авăн, — тенĕ машинист.—Ыран тата лайăхрах ĕçлесчĕ. Паянхи пек пĕр тикĕс ĕçлесен, эпир кашни сехетре сăмаллăнах икшер тонна çапатпăр.

Иртнине Федор Исаев, яланхи пекех, колхозниксем итем çине пырiччен агрегата тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕ, кăлтăксене те тӳрлетрĕ. Пĕрле ĕçлекен Анна Михайловăна вăл чылай канашсем пачĕ. Çак кун вĕсем вăтăр тоннă çапрĕç.

Ленин ячĕпе, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсем государствăна срокчен тырă парса татрĕç. Вăхăтра вăрлăх хывса хăварчĕç. Ытти колхозсене те Федор Исаев чылай авăн çапса пачĕ.

• • •

Вăхăт çурçĕр еннелле шăвать. Правленире çаплах хĕрӳллĕ калаçу пырать. [illegible] партипе правительство ялхуçалăхне вăйлăн çĕклентерес, халăхăн пурнăçне пуян та илемлĕ тăвас тĕлĕшпе хуллен тăрăшни çинчен, çак ĕçре МТС-сем тĕп вăй пулса тăни çинчен калать. Çутă малашлăх кашнинех савăнтарать.

— Ĕçленĕсемĕн ĕçлес килет,—тет Федор Исаев.—Партипе правительство механизаторсене МТС-сен яланхи кадрĕсем пулмалла туни пирĕн ĕçри пултарулăха ытларах çĕклерĕ, хамăрăн квалификацие ӳстерме лайăх майсем туса пачĕ. Кĕçех МТС картишĕнче ĕçлеме, машинăсем юсама, ытти ĕçсене тума тытăнатпăр. Анлă пирĕн професси!

Н. ПУШКИН.

Советски районĕ.

Малта пыракансен опычĕ

Эпир мĕнле майпа кашни гектартан 317-шер пăт вир пухса илтĕмĕр

Вир—кĕрпе тумалли чи паха культурăсенчен пĕри. Эпир çакна шута илсе, вир акмалли лаптăка çулсеренех пысăклатса пыратпăр. Кăçал 5 гектар акрăмăр.

Вир акмалли çĕр лаптăкĕ çинче малтан чылай хатĕрленÿллĕ ĕçсем туса ирттертĕмĕр.

1952 çулта кĕркунне 30—32 сантиметр тарăнăш сухаласа çĕртме турăмăр. Çĕртме тăвас умĕн 2,5 центнер суперфосфат тата 1,5 центнер хлорлă калий сапрăмăр.

Агрономи науки вĕрентнĕ тăрăх, вире çĕрĕн 10 сантиметр чухлĕ сийĕнче 8—10 градус (Цельсипе) ăшă пулсан çеç акма юрать. Çакна шута илсе, вир акмалли лаптăк çинче юр ытларах тытса хăварма тăрăшрăмăр. Мĕншĕн тесен хулăн сийлĕ юр вăраххăн ирĕлет. Çакă тăпрари температурăна кирлĕ пек тытса тăма май парать. Çуркунне юр ирĕлсе тăпра кушăрхаса ситсен, çĕртме сухине сÿрелерĕмĕр.

Кăçалхи май уйăхĕнче сивĕ çанталăк тăчĕ. Çакна пула вир акмалли лаптăка виçĕ хутчен сÿрелеме тиврĕ. Акма пуçличчен икĕ кун маларах тăпрана культиваторпа кăпкалатрăмăр. Тата çакна та калас пулать: тăпрана катокпа пусарса якатассине акма тухиччен те, акнă хыççăн та туса пăхнă. Ĕçри опыт çакна кăтартса пачĕ: тăпрана вир акас умĕн пусарса якатни çак культурăн тухăçлăхне чылай ÿстерме май парать.

Акас умĕн культивацине кăçал июнĕн 1-мĕшĕнче турăмăр, кашни гектар çине 1,5 центнер сульфат аммони хыврăмăр. Çав кунах тăпрана катокпа якатса пусартăмăр. Июнĕн 2-мĕшĕнче ленталла меслетпе, ретсем хушшине 50 сантиметр хăварса, кашни гектар çине 20 килограмм вир акрăмăр.

Май уйăхĕнче çанталăк ăнăçлă пулман пирки, вир акасси июнь уйăхĕччченех тăсăлчĕ. Кая юлса шăтнă вирĕн тухăçлăхне чакарать. Апла ан пултăр тесен, акнă вăрлăха хăвăртрах шăтса тухма çителĕклĕ условисем туса памалла. Эпир çак тĕллевпе вир вăрлăхне 38—43 градуса (Цельсипе) çитиччен ăшăтнă шывра 4,5—6 сехет хушши тытрăмăр. Çакна пула, акнă вир икĕ кун иртсен шăтса тухрĕ. Вăрлăха ăшăтнă хыççăн, кăштах типĕтсен, формалинпа ирçамлатпăр.

Вир шăтса тухсанах, калчана çумкурăкĕсенчен тасатмалла, вĕсем вир калчине пăркаланма чарса тăрассĕ.

Çумланă хыççăн, ретсем хушшине культиваторпа кăпкалататпăр, 6—7 кун иртсен татах тепĕр хут кăпкалататпăр.

Тăпрара тутлăхлă япаласем çителĕклĕ пулсан тата лайăх çанталăк пулсан, вир калчи 25—26 кунтан тĕмеленме тытăнать. Çак вăхăтра çумкурăкне тасатсах тăмалла. Çумланă хыççăн, калча лайăх ÿстĕр тесе, кашни гектар çине 88-шар килограмм аммиаклă селитра сапса апатлантаратпăр. Çу каçиччен тăпрана культиваторпа 3—4 хутчен кăпкалататпăр.

Вире вăхăтра пухса кĕртесси—чи ответлă ĕç. Пухса кĕртессине пĕр кун кая хăварсан, е пĕр-икĕ кун малтан тытăнсан, унăн тухăçне нумай çухатма пулать.

Пулса çитнĕ вир часах тăкăнма тытăнать. Çавăнпа та вир пĕрчи хытса çитнипе çитменнине тăтăшах сăнаса тăратпăр.

Эпир темиçе çул хушши ĕнтĕ «Долинская 86» сортлă вир акса тăватпăр. Иртнĕ çулта пирĕн 3-мĕш уй-хир бригади 3,5 гектар çине вир акса, вăтам шутпа кашни гектартан 238-шар пăт, кăçал 5 гектар çине акса, кашни гектартан 317-шер пăт вир пухса илчĕ.

Вире агротехникăлла правилăсене пурнăçласа аксан, вăл пысăк тухăçлă культурăсенчен пĕри пулать.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕнче кĕрпе тумалли культурăсен тухăçлăхне тăтăшах ÿстерсе пыма лартнă задачăна чыслăн пурнăçласа, эпир вир тухăçлăхне тата та ÿстерессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешетпĕр.

Н. ПЛАТОНОВ,
Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозри 3-мĕш уй-хир бригадин бригадирĕ.

Икĕ колхоз—икĕ тĕслĕх

СĔРПУ. «Победа» колхоз (председателĕ Г. Ефимов юлташ) кăçалхи çул чылай çитĕнÿсем турĕ, тырпула вăхăтра тата тăккаламасăр пухса кĕртрĕ, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татрĕ, вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлесе хучĕ.

Аванс шучĕпе колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 2-шер килограмм тĕштырă, 3-шер килограмм çĕрулми тата пахча çимĕçсем валеçсе панă.

Хальхи вăхăтра, колхоз агрономĕ комсомолка А. Павлова пуçарнипе, колхозниксем çине тăрсах çитес çуракине хатĕрленеççĕ. Вăрлăхсене сортлама тытăннă. Кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пуххасси ăнăçлăн пырать. Колхозăн обществăлла выльăхĕсем валли апат çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Выльăхсем ăшă та таса витесенче хĕл каçаççĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз «Победа» колхозпа юнашарах. Икĕ колхозĕ те пĕр ял-Советĕнчех. Анчах Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн ĕçĕсем пачах урăхла. Кунта халĕ те 1.300 лав çапман ыраш кĕлти ларать. Çĕрулмине те шăнтсан пуçтаркаласа кĕчĕç. 10 гектар çинчи кантăра Октябрь уявĕ тĕлне тин çурлапа вырса кĕчĕç. Колхоз правленийĕ тата унăн председателĕ И. Несмелов тăрăшманнипе выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Лашасем тăракан икĕ витен тăррисем шăтăк-шатăк. Кормушкăсем çук, чÿрече кантăкĕсем çурри ытла ванчăк. 22 тиха тăракан пÿлĕмре чÿрече рамĕсем те çук—витĕр сивĕ çил вĕрет, юр кĕрет.

Ĕнесемпе сыснасем те çавăн пекех япăх условисенче хĕле кĕчĕç. Паянхи куна çитсе те фермăри кормокухньăпа тата кормозапарникпа усă курмаççĕ.

Сурăхсене туса пĕтермен витере хĕл каçарма шутлаççĕ. Кунта пĕр чÿрече рамĕ те çук, сивиттине те витсе пĕтермен, алăкĕсене вырнаçтарман.

Çак çитменлĕхсене пуçламăш парторганизаци (секретарĕ А. Степанов юлташ) çеç мар, КПСС Сĕрпу райкомĕ те пĕлет. Анчах çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшни палăрмасть.

КПСС Сĕрпу райкомĕн Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри çитменлĕхсене пĕтерме халех татăклă пулăшу памалла.

Н. ПЕТРОВ.

Сталинградри гидроэлектростанцие тунă çĕрте

Сталинградри гидроэлектростанцие тунă çĕрте ĕç хăвăртлăхĕ ÿссех пырать.

Çав тери пысăк перемычка. Ку перемычка ГЭС çуртне лартмалли 75 гектар йышăнакан котлована тата плотинăна хÿтĕлесе тăрать. Атăл шывĕ юхтарса ан кайтăр тесе, перемычкăна хурçă юпасенчен тунă пĕр километр тăршшĕ стенапа картласа тухнă.

Перемычка тÿпинчен пăхсан, пĕтĕм котлован курăнса выртать, унăн тĕпĕнче 11 хăватлă экскаватор çĕр чавать. Кашни экскаватор патĕнченех автосамосвалсем пĕрин хыççăн тепри тухса каяççĕ. Пилĕк тата вунă тоннăллă грузовиксем, çĕр чĕтретсе, котлованăн тайлăк хĕррисем тăрăх мăкăлла шăваççĕ, тăпрана темиçе километр аякка кайса пушатаççĕ. Хăйсен йывăр çĕклемне унта пăрахса хăвараççĕ те каллех экскаваторсем патнелле васкаççĕ. Çĕр чавас ĕç кунта талăкĕпех пырать.

Котлованран кăнтăр еннелле пысăкăх мар кÿлĕсем çинче икĕ земснаряд тăрать. Ку суднăсем тăпра сăрчĕсем хушшинче, экскаваторсемпе юнашар тăниччен темĕнле тĕлĕнмелле пек. Земснарядсем—çак сăрт-тусен тытканĕнче, вĕсем Ахтубапа Атăлтан килнĕччĕ. халĕ ĕнтĕ вĕсене унта кайма çул çук. Çак машинăсем çĕр айĕнчен тата Атăлтан котлована сăрхăнса кĕрекен шыва уçласа кăлараççĕ, çав вăхăтрах тăпра та кăларса тăкаççĕ. Земснарядсем кунта строительсем плотинăна тата ГЭС çуртне туса пĕтериччченех пулаççĕ.

Шыв строительсене сахал мар чăрмантарать. Калама çук пысăк котлована шывран хÿтĕлеме, унăн йĕри-тавра 100 шăтăк ытла шăтарма тивнĕ. Çав шăтăксенчен шыва вăйлă насуссемпе Атăла уçласа яраççĕ. Шыв уçламалли шăтăксене 15 метртан пуçласа 30 метр тарăнăш шăтарнă. Унсăр пуçне строительсем 27 шăтăк 70 метр тарăнăш шăтараççĕ. Котлован тĕпне пухăнса кансĕрлекен шыва уçласа тăкаççĕ. Пухăнакан шыва уçласа тăкмасан, вăл котлован тĕпне сирпĕнтерсе яма пултарать. Атăлти тата çĕр айĕнчен тухакан шыв котлована çав-çавах сăрхăнса кĕрет. Самосвалсен час-часах экскаваторсем патне çĕр шÿсе кайнă вырăнти çулпа пыма тивет. Шыв çав тери хăватлă хĕсет. Экскаваторсем халĕ Атăл тĕпĕнчен 5—7 метр аялта ĕçлеççĕ. Юханшывăн тарăнăшĕ нумай çĕрте 10 метра çитет е унтан та ытларах.

Строительсем çĕр ăшнелле мĕн таран кĕрсе пыраççĕ, шывпа кĕрешесси çав тери йывăрланса пырать. Котлован тĕпне трубасем—йĕплĕ фильтрсем хурса тухнă. Вĕсем хăйсен йĕппипсемпе çĕр ăшнелле таран ларса, шыва хăватлăн çăтаççĕ. Йĕплĕ фильтрсем — шыв туласшине чакармалли лайăх майсенчен пĕри. Вĕсемпе Атăлпа Дон хушшинче канал тунă çĕрте тата Мускаври çÿлĕ çуртсем тунă çĕрте пысăк ăнăçлăхпа усă курнă. Вĕсем кунти котлованра халĕ нумай мар-ха—пĕтĕмпе те сичĕ установка çеç, çитес вăхăтра вĕсене ытларах илсе килеççĕ. Йĕплĕ фильтрсен трубисем çĕр айĕнчен тухакан шыва тата Атăл шывне чарма вĕсен çулĕ çине лартнă хăватлă стена пулса тăраççĕ.

«Уралец» экскаватор çинче пĕчĕк ялав вĕлкĕшет, ун çывăхĕпе вунă тоннăллă йывăр автосамосвалсем иртеççĕ. Вĕсен хурçă кузовĕсем çине экскаватор нÿрĕ тăпра тултарать. «Уралец» кабининчи рычагсене çамрăк сын тытса пырать. Унăн сарлака та патмар пичĕ çине кăштах тусан ларнă. Вăл телогрейка тăхăннă, телогрейка айĕнчен, мăйĕ патĕнче, йăрăм-йăрăмлă кĕпи курăнать. Ку çын тинĕс службинче пулни çинчен мичманка та калаcа парать. Мичманкăна морякçем кăна çавăн пек тăхăнма пултараççĕ. Анатолий Травников—нумаях пулмасть моряк пулнă, флотран демобилизаци йĕркипе таврăннă.

Кунта, Атăл стройкин питĕ анлă площадки сарăлса выртнă çĕрте, буровой вышкăсем кăна тăнă тата Атăл леш енчи вĕтлĕх вăрмансенче геологсемпе геодезистсен шурă палаткисем курăннă. Ку çынсем ун чухне çуралакан стройкăн хуçисем пулнă, анчах Сталинградра Гидростройăн вĕренÿ комбиначĕ çав вăхăтра çĕршер специалист — экскаваторщиксем, шоферсем, скреперистсем хатĕрленĕ. Вĕсем халĕ—Сталинградри гидростроительсен нумай пинлĕ коллективĕн çăмăрĕ. Травников та экскаваторщик специальноçне кунта вĕреннĕ. «Уралецăн» экипажĕ çамрăк, тĕреклĕ, хаваслă. Травников та çак экипажра. Экипаж начальникĕ—Иван Нетаев. Вăл Анатолипе тантăш пулин те, экскаватор рычагĕсене пĕрремĕш çул мар тытса курнă, Çĕпĕрти стройкăсенче ĕçленĕ, сахал мар опыт туяннă.

Нетаевпа Травников ĕçлекен 613-мĕш номерлĕ «Уралеца» ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн часах Олег Кошевой ятне панă. ГЭС çуртне лартмалли котлованта пĕрремĕш кубометр тăпра кăларма вăл хисеплĕ тивĕç çĕнсе илнĕ.

Унтанпа икĕ уйăх ытла иртрĕ. 613-мĕш номерлĕ «Уралец» хăй малтанхи курка тăпра чавса кăларнă вырăнтан çĕр ăшнелле чылай инçе кĕрсе кайнă. Стройкăра пĕрремĕш кубометр бетона хывма тивĕçлĕ пулассишĕн çĕнĕ ăмăрту сарăлса кайрĕ. Олег Кошевой ячĕпе тăракан экипаж çав ăмăртура татах пысăк çитĕнÿсем турĕ. Иртнĕ уйăхра вăл ĕçре рекорд кăтартрĕ, ăна Атăлпа Дон каналне тунă çĕрти чапа тухнă экскаваторщиксем те тăвайман: автосамосвалсем çине 113 пин кубометр тăпра кăларса тиенĕ. Ку вăл заданиe икĕ хут ытла тултарни пулать.

Котлована хÿтĕлесе тăракан перемычка хысĕнчен металл мачти пĕлĕтелле кармашать. Ку вăл—монтажниксем Атăл урлă çакса янă канатлă çул хывма тăвакан гигантла юпа. Вăл 132 метр çÿлĕш пулать. Атăлăн сылтăм енчи çыранĕнче те çавнашкал юпа пулать. Çак вырăнта юханшыва сарлака плотинăпа картласа лартаççĕ. Çакса янă çул тăрăх сылтăм çыранран сулахай еннелле строительство материалĕсен тĕп пайĕ куçса каçать. Сылтăм енчи çыранра канатлă çулăн çывăхĕнчех халĕ чул, цемент, вĕт чул т. ыт. материалсен пысăк склачĕсем тăваççĕ.

Сталинградри ГЭС-ăн тĕп сооруженийĕсене тăвас ĕçсем халĕ сарăлса кайнă вырăна строительсем симĕс утрав теççĕ, анчах вăл хăйĕн ячĕпе тахçанах килĕшÿсĕр пулса тăнă. Утрава çыранпа темиçе эпĕ перемычка çыхăнтарса тăрать, çав перемычкăсем çийĕн шоссепе чугун çулсем тăсăлса выртаççĕ. Симĕс «утрав» çинче нумай пулмасть «Пойменная» ятлă чугун çул станцийĕ уçăлнă. Ку çула тата малалла, питĕ пысăк бетон завочĕ патнелле туса каяççĕ. Бетон заводне туса пĕтерсе ĕç вĕçленсе пырать. Çак заводăн стройка валли кĕске срокрах ултă миллион кубометр бетон памалла.

Атăл леш енче, ГЭС площадкинчен инçех мар, урăх хушма предприятисем те тăваççĕ, вĕсемсĕр Сталинградри гидроэлектростанцие ăнăçлăн тума çук. Арматура завочĕ тата çиеле сармалли плитасем туса кăларакан завод тăваççĕ. Плитасем тăвакан заводăн стройкăна пĕр миллион ытла плита памалла. Çавнашкалах автомобильсем юсакан пысăк завод тăваççĕ.

В. ЕРЕМЕНКО.

ÇОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçласа

Иртнĕ суйлав вăхăтĕнче ĕçсыннисем пире ялти Советăн ĕçне лайăхлатса пыма усăллă сĕнÿсем сахал мар парса хăварчĕç. Вĕсем ял Советне кĕрекен «За коммунизм» тата Хрущев ячĕпе тăракан колхозсене организаципе хуçалăх енчен тĕреклетессишĕн уйрăмах хытă тăрăшма хушрĕç.

Суйлавçăсен сĕнĕвĕсемпе наказĕсене пурнăçласа, ял Совечĕ колхозсене вăйлатма тăрăшрĕ.

Ял Совет депутачĕ В. Леонтьев юлташ правлени председателĕ пулса ертсе пыракан «За коммунизм» колхоз ялхуçалăх сулĕнчи мĕнпур ĕçсене вăхăтра туса пычĕ, районта мала тухрĕ. Малта пыракан агротехникăна пурнăçласа, колхозниксем нихçанхинчен те тухăçлăрах тырпул тата пахча çимĕç пухса кĕртрĕç. Виççĕмĕш бригадăри колхозниксем, сăмахран, кашни гектар çинче 15,5 центнер ыраш, гектартан 25,5 центнер кĕрхи тулă, 18 центнер çурхи тулă, 240 центнер çĕрулми, çавăн пекех пысăк тухăçлă пăрса, сĕлĕ, кантăр вăрри туса илчĕç. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш бригадăсем те 1952 çулхинчен тухăçлăрах тырпул тата пахча çимĕç пухса кĕртрĕç. Ялхуçалăх артелĕ государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçларĕ. Уставпа пăхнă фондсене те туса çитерчĕ. Колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 3-шер килограмм тĕштырă, 2-шер килограмм çĕрулми тата пахча çимĕç, 3-шер килограмм утă, пĕр тенкĕ укçа валеçсе параççĕ. Выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш чылай ÿсрĕ, 1952 çулта çак тупăш 130 пин тенкĕ пулнă пулсан, кăçал 160 пин тенкĕрен иртет, колхозăн мĕнпур отраслĕсенчен илекен тупăшĕ çур миллион тенке яхăн пулать.

Колхоз кăçалхи октябрĕн 1-мĕшне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарчĕ, государствăна сĕт, аш-какай, çăмарта, çăм памалли обязательствăсене срокчен пурнăçларĕ. Çуллахи вăхăтра фермăри сăвакан ĕнесене симĕс клевер çулса çитерессине организациленĕ, хальхи вăхăтра вĕсене силоспа, çĕрулмипе, турантăпа тăрантараççĕ. Çавна май ĕнесем сĕт нумайрах пама пуçларĕç. Кăçалхи 11 уйăх хушшинче кашни сăвакан ĕнерен 1.341 литр сĕт суса илсе, пирĕн дояркăсем ку енĕпе районта иккĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлассишĕн колхозра социализмла ăмăрту вăйлăн сарăлса кайрĕ. Колхозниксем 1954 çулта кашни гектартан 18 центнертан кая мар тĕштырă, 250 центнер çĕрулми, 6 центнертан кая мар техникăлла культурăсем туса илес тĕллевпе ĕçлеççĕ. Вĕсем çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Акма кирлĕ пулакан пур вăрлăхсене те çителĕклĕ уйăрнă, сортласа тасатнă. Калчасене çуркунне апат пама 150 тонна минераллă удобрени кÿрсе килнĕ, татах 100 тонна илме заявка панă. Уй-хире тислĕк кăларас, юр тытса хăварас, ялхуçалăх машинисемпе ĕç хатĕрĕсене юсас ĕçсем те анлăн сарăлса пыраççĕ.

Пирĕн ĕçри çитменлĕхсенчен пĕри Хрущев ячĕпе тăракан колхоз чылай ĕçсем енĕпе «За коммунизм» колхозран юлса пыни пулать. Çавăнпа та ял Совечĕ юлашки вăхăтра çак колхоз çине тимлĕрех пăхма пуçларĕ, унăн ĕçĕсем çинчен эпир час-часах исполком ларăвĕсенче тата Совет сессийĕсенче сÿтсе яватпăр. Нумай пулмасть колхоз выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухрăмăр. Ку ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурри палăрчĕ. Кун пирки ял Совет исполкомĕн ларăвĕнче ыйту лартса пăхса тухрăмăр. Çакăн хыççăн колхоз председателĕ Трофимов юлташ выльăх-чĕрлĕхе пăхас ĕçе самаях лайăхлатрĕ. Колхоз сурăхсем валли çĕнĕ вите лартрĕ. Çак колхоза районти малта пыракан ялхуçалăх артелĕсемпе танлаштарма тăрăшасси пирĕн ял Совечĕн пысăк задачи пулса тăрать.

Ял Совечĕ халăхран укçа-тенкĕ пухас енĕпе те юлса пыратчĕ. Çакăн çинчен эпир ял Совет исполкомĕнче тата сессийĕнче тĕплĕн сÿтсе яврăмăр, налог агенчĕн Ефремова юлташăн отчетне итлерĕмĕр. Укçа-тенкĕ пухас енĕпе ял Совечĕ мĕншĕн юлса пынин сăлтавĕсем çинчен суйлавçăсене тĕплĕн каласа патăмăр. Çакăн хыççăн ял Совечĕн бюджет комиссийĕпе финанс активĕ хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç. Ял Совечĕ тăваттăмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне ирттерсе тултарчĕ, райсовет исполкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Депутатсемпе финанс активисчĕсем çак ялава 1954 çулта та хамăр аллăрах хăварассишĕн тăрăшса ĕçлеме сăмах пачĕç.

Ял Совечĕ колхозлă ялсен сăн-сăпатне çĕнетсе урăхлатас, культурăлла ÿстерес ыйтусемпе те куллен интересленет. Çитес çулта ял Советне кĕрекен пур ялсене те электрификацилесе çитеретпĕр, чылай колхозниксен килĕсене радио кĕртетпĕр, çĕнĕрен йывăçсем лартса хăваратпăр, кÿлĕсемпе çăлсем тăватпăр. Кашни колхознике килте усрама ĕне, сысна, сурăхсем, чăх-чĕпсем туянма пулăшас тетпĕр.

Кашни уйăхрах пĕр-икĕ хутчен ларусем тата сесси ирттеретпĕр. Вĕсенче паянхи пурнăçпа çыхăнса тăракан политикăлла тата хуçалăхла ыйтусене час-часах пăхса тухатпăр. Ыйтусене сÿтсе явас тата решенисем йышăнас, вĕсене пурнăçланине тĕрĕслес ĕçе депутатсемпе активистсем йышлăн хутшăнаççĕ. Ял Совет депутачĕсенчен шкул директорĕ Б. Верендеев, зоотехник М. Степанов, пахчаç В. Кириллов, Т. Иванова, А. Степанова колхозницăсем кулленхи ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Вĕсем çак кунсенче хăйсен округĕсенчи суйлавçăсемпе тĕл пулса отчетсем туса пачĕç. Вĕсен отчечĕсене сÿтсе явса, суйлавçăсем депутатсене тата пĕтĕм ял Совечне халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн тимлĕрех тăрăшса ĕçлеме хушрĕç.

Хальхи вăхăтра эпир Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ «РСФСР Министрĕсен Совечĕ «Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем çинчен» йышăннă постановленире палăртнă задачăсене пурнăçлама хамăр вăйсене мобилизациleме тăрăшатпăр, хамăр ял Советне республикăра малта пыракан ял Совечĕ тăвассишĕн кĕрешетпĕр.

Г. ЗАМЯТИН,
Ишлей районĕнчи Сĕньял-Покровски ял Совет исполкомĕн председателĕ.

Çĕнĕ библиотека

СЕНТĔР. Ахмане ял Советĕнче çак кунсенче библиотека ĕçлеме пуçларĕ. Библиотекăра пурĕ икĕ пин ытла кĕнеке. Вĕсен шутĕнче чăваш, вырăс, украина тата ытти халăхсен писателĕсен произведенийĕсем пур. Колхозниксемпе колхозницăсем Докучаев, Вильямс, Мичурин, Лысенко тата ыттисен ĕçĕсемпе те паллашаççĕ.

Писательсен союзĕн ĕçне лайăхлатмалла

(«Литературная газета» хаçатра тухнă «Писательсен икĕ организацийĕ» ятлă статьяран).

Чăваш совет писателĕсен организацийĕнче, çав организаци кăларса тăракан журналпа альманахсен редакцийĕсенче, правленипе творчествăлла секцисен ларăвĕсенче,—пур çĕрте те пĕрре пăхсах ĕçсене темĕнле ятшăн çеç, формăшăн çеç туса пынине асăрхама пулать. Кунта нимĕнпе те интересленмеççĕ, нимĕншĕн те хыпса çунмаççĕ. Чăваш совет писателĕсен пÿлĕмĕнчи календарь 1953 çулти кĕркуннене мар, 1951 çулти çуркуннене кăтартса тăнă пулсан та, çакна пĕри те асăрхаман пулĕччĕ. Çапла калани вăл хушса, ÿстерсе, калани мар. Кунта икĕ çул каялла мĕнле çырлахса, лăпланса ларнă, халĕ те çапах—нимĕн те улшăнман. Чăваш совет писателĕсен правленийĕн черетлĕ ларăвĕсенче çапла, ĕлĕкхи пекех, литература ĕçĕнчен таçта инçетре тăракан ыйтусем çинчен сÿтсе яваççĕ. Анчах лайăх кĕнекесем çаплах сахал пичетленсе тухаççĕ-ха. Уйăхра пĕрре тухса тăракан «Ялав» журналта тата «Тăван Атăлпа» «Дружба» альманахсенче шупка, начар произведенисем пичетлеççĕ.

Пĕр журнал тата икĕ альманах нуррн писательсене ĕçре питĕ калама çук хавхалантармалла пек туйăнать. Анчах та «Ялав» журнал çапах-ха чăваш писателĕсене савăнтармасть, хурлантарать кăна.

Вырăнти хаçатсенче журнала хытă критиклени хыççăн, журнал редакторĕ А. Эсхель журнал мĕншĕн япăх ĕçлени çинчен писательсен пухăвĕнче каласа парасшăн пулчĕ. Унăн шучĕпе «Ялав» журнала писательсен хăйсен çĕнĕ произведенийĕсене редакцине ыркса панан пирки начар тухать иккен. Нимĕн те пичетлемe çукчне. ... ... [illegible] ... Тÿррипех калама, çапла калани вăл редакци хастар ĕçлеменнине хÿтĕлени пулать.

Вулакансене вара пурнăç тăпни кăштçеç сисĕнекен калавсемпе очерксем нмеппе те çырлахтарма пултараймаççĕ. Вĕсем тарăхса редакцине тата писательсен Союзне çырусем çыраççĕ. (Калас пулать, çав çырусене хăшпĕр чухне тытса усса та пăхмаççĕ). Журналăн август уйăхĕнче тухнă номерне илсе пăхар. Кунта редакци портфелĕнче нимĕн те çуккипе кăна В. Сапайăн «Çиленме сăлтавĕ çук» ятлă япăх калавне пичетлесе кăларнă. Хуларан тăван ялне таврăнакан студент килне кĕмесĕрех, тÿрех колхозниксемпе пĕрле уйра ĕçлеме тытăнни çинчен питĕ нумай çырнă, çакă вăл тахçанах йăлăхтарса çитернĕ ĕнтĕ. Якур мучи сăн-сăпачĕ те çĕнĕ япала мар, çавăн пек «хаваслă мучи» чăваш писателĕсен пĕр калавĕнчен тепĕр калава, повеçрен повеçе куçса пырать.

Писательсен [illegible] пухăвĕнче вулакансем те пулчĕç. Çав пухура «Ялав» журналăн 1952—1953 çулсенче тухнă вунултă номерĕнчен пиллĕкĕшĕнче критикăлла статьясем пачах та çуккине палăртрĕç. Çав çулсенче пичетлесе кăларнă вунпĕр статьяран иккĕшне питĕ çиелтен кăна çырса кайнă (Н. Ильбекăн «Ачасем валли лайăх кĕнекесем парар», А. Артемьевăн «Калавсем çинчен» ятлă статьясен). 16 уйăх хушшинче журналта писательсен ĕçталăхĕ çинчен, литературăри типăл сăнарсем çинчен пĕр статья та пичетлесе кăларман. Чăваш халăх прочĕсем—Н. Ухсайпа С. Эльгер, А. Талвир, К. Турхан тата ытти писательсен произведенийĕсене хăйсен журналне намаççĕ.

Журнал лăйкки пекех питĕ вал илсе тухать. Сăмахран, Н. Г. Чернышевский çинчен редакци хăй ячĕпе çырнă «Аслă писатель—революционер» ятлă статьяна пичетленĕ журнал номерĕ Л. Н. Толстой çуралнăранпа 125 çул тултарнă кунсенче тин вулакансем патне çитнĕ. Çиххепинне статьине те редакци хăй çырман иккен. Литературăна чунтан юратакан çынсем çавăнтах çав статьяна В. Боголюбовпа Н. Бельчиков статьисене иккĕшне пĕрлештерсе, майлаштарнаса çырнă тесе журнал редакторĕ А. Эсхель патне усă çыру çырса ячĕç.

Чăваш совет писателĕсен организацийĕ кăларакан журналпа альманахсен çитменлĕхĕсем çинчен парти обкомĕ темиçе хутчен те асăрхаттарнă. Вĕсене «Литературная газета» хаçатра та критикленĕ. Писательсен организацийĕ çав критикăпа мĕнле йышăннă-ха? Кунта çакăн пек тума хăнăхнă: шавлакалаççĕ, вăшне-вĕрне хăтăрса илкелеççĕ, ирăхлăрах, майлăрах «решени» тăваççĕ те, вара çав йăлăнсемпе çитменлĕхсем çинчен манса тепре ырах мар калаçу пуçланиччен лăпланса лараççĕ. 1952 çулта июлĕн 31-мĕшĕнче Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕ çапла йышăнать: «Пур писательсене те, уйрăммăнах ятлă литераторсене «Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманаха ытларах явăçтарас. «Ялав» журнал тата «Тăван Атăл» редакторĕсене çапла тума хушас: редакци коллегийĕсен ĕçĕнче чăннипех коллективлăх пултăр». 1952 çулта ноябрĕн 29-мĕшĕнче правлени ларăвĕнче, «Ялав» журналăн виçĕ номерне пăхса тухнă хыççăн, çапла йышăннă: «А. Эсхеле, В. Алагерe тата А. Алгана харуга чухса калаписене шута илсе, «Ялав» журнала лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине палăртма хушас». 1953 çулта февралĕн 11-мĕшĕнче протокол çине каллех çапла çырса хунă: «Ялав» журнал редколлегийне чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕ 1952 çулта июлĕн 31-мĕшĕнче А. Успенскин «Литературная газета» хаçатра пичетленнĕ «На положении пасынков» ятлă статьи пиркй йышăннă решенине çывăхри вăхăтрах пурнăçа кĕртме хушас». 1953 çулти апрелĕн 27-мĕшĕнче правлени ларăвĕн черетлĕ протоколĕ тата тепĕр сĕнÿпе пуйнă: «Палăртас, совет писателĕсен Союзĕн членĕсем тата кандидачĕсем журнал ĕçне çаплах-ха сахал хутшăнаççĕ». Сентябрĕн 24-мĕшĕнче юлашкинчен çапла йышăннă: «Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕнчи руководительсен «Ялав» журнала конкретлăрах ертсе пымалла».

«Асăрхаттарас», «тума хушас», «пĕлтерес», «палăртас» тенĕ сăмахсем чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕ журналшăн хыпăнса çунмине мар, çук, ответ тыттарасран пăрăннине пĕлтереççĕ.

Чăваш совет писателĕсен правленийĕ (председателĕ М. Шумилов) писательсен творчествăри хастарлăхĕ чакса пыни пĕрте пăшăрхантармасть. Анчах та пăшăрханмалли фактсем сахал мар. Чăваш писателĕсем чылайăшĕ хальхи пурнăçри ыйтусенчен пăрăнса каяççĕ, çаян кунхи тĕп конфликтсене курмаççĕ. Чăваш прозинче çаплах-ха вăрçă вăхăтĕнчи тата вăрçă хыççăнхи малтанхи çулсенчи пурнăça кăтартса паракан произведенисем ытларах. Чăвашсен паллă прозаикĕсенчен пĕри, Л. Агаков, юлашки çулсенче пĕр паллăрах çĕнĕ произведени те çырса памарĕ, вăл хăйĕн тахçан ĕлĕк çырнă кивĕ кĕнекисене тепĕр хут пичетлесе кăларинех кăмăлне тултарса, çырлахса ларать. Çавăн пек тимсĕр пулни пĕр Л. Агакова çеç мар тата ытти хăшпĕр писательсен вăйăлне те кансь. Анчах вулакансен вăйăлне кансь-и-ха çак япала! Çук, вулакансем ку тĕлĕшпе урăхла шутлаççĕ. Вĕсем хăтăрмна, шупка кĕнекесене илмеççĕ, кăмăлĕсене вырăнлă хут тухакан япăх кĕнекесене пушшех те вуламаççĕ. А. Эсхелĕн «Юратнă çĕр» ятлă сăвăсен кĕнекине вăлпăн çичĕ çул хушшинче темиçе хутчен те пичетленĕ. Юлашки хутĕнче ăна 10.000 кĕнеке туса кăларнă. Çав шутран 7.971 кĕнеке склатрах сутăнмасăр выртать. Уйăп Мишши сăввисен кĕнекисем те хăйсем валли çавăнтах йăва çавăрнă.

Секцисен пухăвĕсенче, творчествăлла ыйтусене сÿтсе явас вырăнне, час-часах пĕр-пĕрне йăхтаса çеç ирттереççĕ. Поэзи секцийĕн пĕр ларăвĕнче çамрăк вырăс поэчĕн Н. Пиняевăн сăввисене пăхса тухнă чухне «ĕнтĕ ăна чăн-чăн поэт тесе шутлама пулать» тенĕ сăçăсем илтĕннĕ. С. Эльтер çапла каланă: «Пиняев пĕтĕмĕшпех аталанса çитнĕскер. Ун сăввисене вуларăм, анчах сахалтарах» (!?), — тенĕ. Юлашки сăмахĕсемпе килĕшме те пулать пулĕ. Çамрăк поэтăн «Дружба» альманахра пичетленнĕ ак çакăн пек йĕркисене илсе пăхар:

Мой товарищ был в войну танкистом
Первого гвардейского полка.
Под Москвой он давил фашистов
И в Берлине он донал бока,—текине вулана пулсан, Эльтер Пиняева пĕтĕмĕшпех аталанса çитнĕ тесе аттестат памам та пулĕччĕ.

«Пулса çитнĕ», «мастер», «чăваш литератури мухтавĕ»—çакăн пек эпитетсене ачашлана çамрăк прозаика А. Артемьева та. Вăл вара хăйне ытлашши мухтанине касса кайнă-пулас, хăйĕнчен аслăрах юлташĕсене кура, ĕçлеме пăрахнă, хăйĕн ĕлĕкрех çырнă произведенисене тепĕр хут пичетлесе кăларасшăн çырлахма пуçланă.

Писательсен организацийĕнче пĕтĕм ĕçшĕн чăннипе ответ тытни çук пулсан, вара уйрăм писательсем те часах хăйсен ответлăхне туйма пăрахаççĕ. [illegible] сем ĕçсе пурнăçа писательсен [illegible] ... КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ социализмла ... [illegible]

[illegible]

Юлташла тăрăхлани.

Чăваш писателĕсем пурнăça сăнаççĕ...

П. СИЗОВ ÿкерчĕкĕ.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствинче

Çак кунсенче Индонези республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Сунарьо господин СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов патне çыру янă. Çырура Индонези республикин Правительствин çывăх вăхăтра Мускавра. Посольство тума шутлани çинчен пĕлтернĕ. Сунарьо господин çакăн çинчен пĕлтерме ыйтнă: ку сĕнĕве СССР Правительстви ырласа йышăнма пултарать-и?

Сунарьо господина ответлесе çырнă хăйĕн çырăвĕнче В. М. Молотов çапла пĕлтернĕ: Совет Правительстви Индонези Правительствин асăннă сĕнĕвне ырлать, вăл Индонези республикин посолне Мускавра йышăнма хатĕр. Хăй енчен Совет Правительстви СССР посолне Джакартăна яма хатĕр.

Индири хаçатсем Америка пропагандине тăрă шыв çине кăлараççĕ

ДЕЛИ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Америка пропаганди Индипе Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи туслă çыхăнусем çинчен элеклеме хăтланнишĕн Индири общественность хытă тарăхать.

Лакнау хулинче эрнере пĕр хут тухса тăракан «Пипл» хаçат хăйĕн дипломатилле корреспонденчĕ Делирен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Статья «Хăрушă та ирсĕр элек» ятлă. Пĕрлешӳллĕ Штатсем Индипе унăн Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнăвĕсем çинчен сарнă элек пирки вулакансене аса илтерсе, çавăн пекех США Индие çар базисемпе хупăрласа илме хăтланнине кăтартса парса, хаçат Америкăри хаçатсенчи суя хыпарсене илсе кăтартать. Америкăри хаçатсем: Индипе Совет Союзĕ хушшинчи суту-илӳ килĕшĕвĕ «суту-илӳ килĕшĕвĕ кăна пулса тăмасть, килĕшӳре Россия Индие çар снаряженийĕ парса тăма обязательство илнĕ», тесе пĕлтернĕ. «Пипл» хаçат чунтан тарăхса çапла çырать: «Суя фабрикаНчĕсем!.. Эсир айванла суйни çине Инди йĕрĕнсе кулнипе ответлет».

Делири пурнăçа лайăх пĕлсе тăракан кашни çын, тесе çырать малалла хаçат, çакна пĕлет: вырăссем Инди халăхĕпе çыхăнса хăйсен шухăш-кăмăлĕ таса пулнине, вĕсем раса тĕшмĕшĕсене йышăнманнине, ыттисен шухăш-кăмăлне чун-чĕререн хăнлама тăрăшнине кăтартаççĕ. Американецсем çинчен вара çакăн пек калама май çук, тесе шутлать хаçат.

Репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен нейтральнăй комисси пĕлтерни

ПЕКИН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернĕ тăрăх, репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен нейтральнăй комисси декабрĕн 16-мĕшĕнче Корейăпа Китай енне çакăн çинчен пĕлтернĕ: Тонжаннири лагерьте Корейăн тыткăна лекнĕ тăватă çар çыннипе вĕлернĕшĕн. Америка енĕн 19 агентне суд умне тăратаççĕ. Айăпланакансене декабрĕн 13-мĕшĕнче, 38-мĕш номерлĕ сектортa тыткăнри çар çыннисене вĕлернĕ хыççăн тепĕр куннех, арестленĕ.

Репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен комиссине декабрĕн 17-мĕшĕнче янă çырура Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен представителĕ Ли Сан Чо генерал çакăн пек требовани лартнă: комиссин тата Индин хуралта тăракан çарĕсен çак ĕçе тивĕçлипе пăхса тухмалла, çынвĕлерекенсене хытă айăплямалла. Тыткăнри çар çыннисене каллех вĕлерни, кăтартса панă Ли Сан Чо генерал хăйĕн çырăвĕнче, Ли Сын Манпа Чан Кай-ши агенчĕсем Корейăпа Китайăн тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе хăрушă террор туса пынине тепĕр хут çирĕплетсе парать.

Корейăпа Китай енĕн тыткăна лекнĕ 21 çар çынни çак ĕç тăрăх свидетельсем пулса тăраççĕ. Вĕсене тыткăнри ытти çар çыннисенчен уйăрнă. Тыткăнри çар çыннисем комиссирен хăйсене репатриацилеме ыйтнă. Ли Сан Чо генерал çакăн пек требовани лартнă: репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен комиссин тыткăнри çар çыннисене, комисси прависем çинчен тунă килĕшӳ тăрăх, май килнĕ таран хăвăртрах репатриацилемелле.

Американецсем тыткăнри çар çыннисене вăйпа хăйсем патĕнче тытса юласшăн

Синьхуа агентствин корреспонденчĕ пĕлтерни

ПЕКИН, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешнĕ Нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕ Хэлл генерал Корейăна пынă хыççăн, Америка енĕ ăнлантару ĕçне чарса лартас тата тыткăнри çар çыннисене тытса чарас тĕлĕшпе хăйĕн ĕçне вăйлатнă. Хэлл уççăнах çапла каланă: вăл тыткăна лекнĕ корееццемпе китаецсем çинчен тата вĕсене лисынмановецсемпе чанкайшистсене вăрçăра усă курма парасси çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явас шутпа Корейăна пынă. Сăмах Тонжаннири лагерь çинчен пырать.

Хэлл çапла пĕлтернĕ: вăл тата Ли Сын Ман Тонжаннири лагерьте тыткăнра пурăнакан китаецсемпе корееццене январĕн 22-мĕшĕнче çĕрле «çурçĕр иртсен пĕр минутран тытса илесси» çинчен каласса тытăннă.

Репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен нейтральнăй комисси председателĕ — Тимайя генерал патне пырса кайнă хыççăн, Хэлл Америка корреспонденчĕсене çапла пĕлтернĕ: вăл Тимайя генералпа «тыткăна лекнĕ çар çыннисене ирĕке кăларасси» çинчен калаçнă.

Хэлл Тимайя патне пырса кайнин тĕллевĕ уççăнах паларнă: репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен комиссе хистемелле, ăна ăнлантару ĕçне тăвасси çинчен йышăннă решение пăрахăçлаттармалла, тыткăнри çар çыннисене «ирĕке кăларасси çинчен» Америка тунă плана пурнăçламалла.

Хэлл хыççăн Корейăна çак кунсенче США-ри штаб начальникĕсен Пĕрлешӳллĕ ушкăнĕн представителĕ Рэдфорд тата государство секретарĕн помощникĕ Робертсон пырса çитмелле. Америка журналисчĕ Роберт Ален каланă тăрăх, Рэдфордпа Робертсон Инсет Хĕвелтухăçне тухса кайнă. Унта вĕсем тыткăнри çар çыннисене массăллăн хăйсен аллинче тытса юлас тĕлĕшпе Ли Сын Мана мĕнле майпа пулăшу парасси çинчен Америка çарĕсен командованине инструкци парасшăн.

Гоминдановецсем Бирмăран тухса каясшăн мар

ПАРИЖ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Рангунран пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 21-мĕшĕнче гоминдан çарĕсене Бирмăран «эвакуацилессине» (урăх çĕре куçарассине) чарса лартасси çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

Эвакуаци вăхăтĕнче (вăл ноябрĕн 7-мĕшĕнче пуçланнă) Бирмăран 2.248 гоминдановецă, вăл шутра хĕрарăмсемпе ачасене 400 çын ытларах илсе кайнă. Ют çĕршывсенчи хаçатсем çапла пĕлтернĕ: Бирмăран илсе кайнă салтаксемпе офицерсенчен нумайăшĕ чирлĕ е малашне çар службинче тăма юрăхсăрскерсем пулнă.

Эвакуаци вăхăтĕнче гоминдановецсем хăйсен хĕçпăшалне памалла пулнă. Анчах, Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, эвакуацин пĕтĕм тапхăрĕ хушшинче гоминдановецсем пурĕ те 26 винтовка, 3 пистолет тата пĕр пулемет кăна панă.

Çапла вара, «эвакуаци» вĕçленнĕ хыççăн, ют çĕршывсенчи агентствăсем пĕлтернĕ тăрăх, 10.000 яхăн çынтан тăракан гоминдан çарĕ Бирмăрах юлать. Унăнмăн илсен, Бирмăра гоминдан çарĕсен командующийĕсенчен пĕри — Ли Цзе-фын генерал-майор юлнă. Рейтер агентствин корреспонденчĕ Рангунран пĕлтернинчен çакă курăнать: гоминдан çарĕсем Хĕвелтухăç Бирмăн мĕнпур территорийĕнче — çурçĕрти Мьиткьин хулинчен пуçласа кăнтăрти Моулмейн хули таран тăраççĕ.

Делири радио çапла пĕлтернĕ: гоминдан çарĕсем Бирмăран тухса каясшăн мар, вĕсем çитес вăхăтрах Тайвань утравĕ çинчен пулăшу пырасса кĕтеççĕ. Ют çĕршывсенчи хаçатсем гоминдан бандисемпе Бирма правительствин çарĕсем хушшинче час-часах тытăçусем пулса иртни çинчен пĕлтереççĕ.

Çапла ĕнтĕ, гоминданăн Бирмăри бандисем тата Чан Кай-шин Тайвань утравĕ çинчи шайкки, США хăвхалантарса пынипе (США представителĕ гоминдановецсене Бирмăран «эвакуацилес» тĕлĕшпе ĕçлекен висĕ çĕршыв комиссийĕн председателĕ пулса тăрать), ООН Генеральнăй Ассамблейи 1953 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче йышăннă резолюцине нимĕн вырăнне те хуман. Ку резолюци гоминдан çарĕсене хĕçпăшалсăрлантарма тата çак çĕршывран илсе тухма палăртать.

СУТĂНЧĂКСЕМПЕ ШПИОНСЕН УШКĂННЕ СУД ТУНИ

ПРАГА, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Прагăри çар трибуналĕнче сутăнчăксемпе шпионсен 25 çынтан тăракан ушкăнне суд туса пĕтернĕ.

Çак ушкăн Чехословаки республикинче вăрттăн информацисем пухнă, хăйсен агенчĕсен урă тата радиопередатчикла усă курса, вăл сведенисене ют çĕршывсенчи разведкăсене ăйтарса тăнă. Сутăнчăксемпе шпионсен ушкăнĕ ют çĕршывсенчи разведкăсенчен инструкцисем, укçа тата айăплă ĕçсем тума техникăлла пайлашни илсе тăнă. Айăпланакансем ют çĕршывсенчи агентсене хăйсен хваттерĕсенче хупланă. Банда членĕсенчен нумайăшĕ — националсоциалистсен партийĕн реакциллĕ членĕсем пулнă çынсем, кулаксен ывăлĕсем тата ыттисем те.

Шпионсен çак ушкăнĕн руководителĕсене тата организаторĕсене — Йозеф Козлика тата Ярослав Петержика вĕлермелле туса приговор йышăннă. Иржин Андерлова — ĕмĕрлĕхех тĕрмере хупса усрамалла, ытти айăпланакансене 6 çултан пуçласа 20 çул таран тĕрмере хупса усрамалла тунă.

Франциири президент суйлавĕ

ПАРИЖ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, республика президенчĕн суйлавĕнче вунпĕрмĕш хут сасăлама 2 кандидатурăна — Нежлена (социалист) тата тинĕс леш енчи территорисем тĕлĕшпе ĕçлекен министра Луи Жакинона («независимăйсен» тата хресченсен партийĕн кандидачĕ) баллотировкăна тăратнă. Агентство кăтартса панă тăрăх, Жакино хăй «Европăри оборона пĕрлешĕвне» хирĕç тăни çинчен темиçе хутчен те каланă. Нежлен 372 сасă, Жакино 338 сасă илнĕ.

Çапла ĕнтĕ вуниккĕмĕш хут сасăламалла пулать, мĕншĕн тесен кандидатсенчен никăшĕ те çуррипен ытларах сасă пухайман.

Паян 16 сехетре (Мускав вăхăчĕпе 18 сехетре) вуниккĕмĕш хут сасăлаççĕ.

ПАРИЖ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Франци президенчĕн суйлавĕнче вуниккĕмĕш хут сасăлассине вырăнти вăхăтпа 16 сехетре иртерес вырăнне 18 сехетре (Мускав вăхăчĕпе 20 сехетре) иртерме йышăннă.

Президент суйлавĕнче сылтăм партисем антраса ӳкнишĕн хаçхине тухакан хаçатсем хăйсем кăмăлсăр пулни çинчен çыраççĕ.

ФРАНЦИИРИ ПРЕЗИДЕНТ СУЙЛАВĔ ПИРКИ

ПАРИЖ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтернĕ: Ланьель хăйĕн ятне Франци республикин президентне суйлама тăратнă кандидатсен списокĕнчен кăларни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

ПРЕЗИДЕНТ ПУЛМА РЕНЕ КОТИЕ СУЙЛАНА

ПАРИЖ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франци республикин президенчĕ суйлавĕнче вуниккĕмĕш хут сасăланă çĕре парламентăн 898 членĕ хутшăннă, 882 бюллетене тĕрĕс тесе йышăннă. Рене Котишĕн 431 сасă, Нежленшĕн 333 сасă панă. Ытти кандидатсем 118 сасă пухнă. Кандидатсенчен никăшĕ те çурринчен ытларах сасă (462 сасă) пухайман пирки вунвиççĕмĕш хут сасăламалла.

ПАРИЖ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Франци республикин президенчĕн суйлавĕнче 13-мĕш хут сасăланă хыççăн 871 бюллетене тĕрĕс тесе йышăннă. Рене Котишĕн 477 сасă, Нежленшăн 329 сасă панă. Çапла вара Рене Котие Франци республикин президенчĕ пулма суйланă.

Франциири Коммунистсен партийĕн парламентри ушкăнĕсем пĕлтерни

ПАРИЖ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Франциири коммунистсен партийĕн парламентри ушкăнĕ ячĕпе Жак Дюкло тата Бийу декабрĕн 22-мĕшĕнче тухса каланă. Хăйсем пĕлтернинче вĕсем çакна палăртнă: коммунистсем «Европăри оборона пĕрлешĕвне хирĕç тăнине кăтартса панă тата хăйĕн кандидатури тавра парламентăн икĕ палатинчи членсен ытларахăшне пĕрлештерме пултаракан кирек мĕнле республика деятелĕшĕн те» сасăлама йышăннă.

«Коммунистсем çирĕп позици йышăнса тăман пулсан, Ланьель поражени тӳсмен пулĕччĕ, блока кĕресси çинчен калакан суйлав законĕ пулман пулсан (çав закон пулăшнипе наци представительствине пăсса кăтартнă тата Коммунистсен партийĕнчен парламентри 80 вырăна вăрланă), социалистсен партийĕн кандидатне Нежлена Республика президенчĕ пулма суйланă пулĕччĕ. Эпир çакна кăтартса панăччĕ ĕнтĕ.

Де Голль партийĕнчи нумай депутатсем тата республика совечĕн членĕсем, «Европа çарне» хирĕç тăнине палăртнăскерсем, Ланьельшĕн сасăласа çакна кăтартса панă: вĕсем хăйсен класс интересĕсене наци интересĕсенчен пысăкрах вырăна хураççĕ, çавăнпа та МРП (католикла парти.—Ред.), хăйне «социалистла» парти тесе шутлаканскер, шултра предприятисен представителĕшĕн сасăлать.

Юлашкинчен эпир Ле Трокера çакăн çинчен пĕлтертĕмĕр: парламента наци интересĕсене хӳтĕлесси пирки тӳрех «çук» тесе калама чăрмантарас тесе, уйрăм ушкăнсем ырлакан кандидатсемшĕн эпир сасăлама пултараймастпăр».

Шпионсене тивĕçлипе айăпланă

БЕРЛИН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Котбус хулинчи округ сучĕнче Хĕвеланăç Берлинри шпионла организацин ултă агентне суд туса пĕтернĕ. Çак организаци «политикăлла аслă шкул» ячĕпе витĕнсе тăнă. Организаци Бонри «Бланк ведомстви» текенскерĕн разведка службине çыхăнса ĕçленĕ.

Айăпланакансене Демократиллĕ Германи Республикине хирĕç шпионла сăтăрла ĕç туса çынăшăн айăпланă.

Сутра «политикăлла аслă шкул» текенскерĕн преступникла ĕçне тĕрĕ шыв çине кăларнă. Айăпланакан Хорст Эккер сутра çакна кăтартса панă: çак шкул Совет Союзне халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç ĕçленĕ.

Сут Хорст Эккера, Бернгард Ханиша, Вальтер-Эйснерра, Курт Фейста, Пауль Хаука тата Маргарита Дункеле 9 çултан пуçласа 15 çул таран тĕрмере хупса усрамалла туса приговор йышăннă.



Польша Халăх Республикинчи Кедзежин хулинче (Опольски воеводство) хими комбиначĕ тăваççĕ. Вăл республикăри чи пысăк комбинатсенчен пĕри пулать. Çĕнĕ комбинат азотлă удобренисем нумай туса кăларма тытăнать. Комбинат кашни çулталăкра иртнĕ çулта Польшăри мĕнпур хими завочĕсем туса кăларнинчен чылай ытларах удобрени туса кăлармалла.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: комбинат строительствинче.

Корейăри ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕн VII-мĕш пленумĕ

ПХЕНЬЯН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Нодон Синмун» хаçат Корейăри ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕн декабрĕн 18—19-мĕшĕсенче пулса иртнĕ VII-мĕш пленумĕ çинчен пĕлтернине пичетлет. Пленум икĕ ыйту сӳтсе явнă:

1. Пĕрлĕхлĕ демократиллĕ отечественнăй фронтăн ĕçне тĕреклетесси çинчен;
2. Корейăри ĕçлĕх партийĕн отчетпа суйлав кампанине ирттересси çинчен.

Малтанхи ыйту тăрăх Корейăри ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитет председателĕн заместителĕ Ким Ир, иккĕмĕш ыйту тăрăх Корейăри ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитет председателĕн заместителĕ Пак Ден Ай доклад туса панă. Сӳтсе явнă ыйтусем тăрăх тивĕçлĕ решенисем йышăннă.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Верховнăй халăх пухăвĕн VI-мĕш сессийĕ хупăннă

ПХЕНЬЯН, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Верховнăй халăх пухăвĕн VI-мĕш сессийĕ хăйĕн ĕçне вĕçленĕ. Сессире Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен кабинечĕн председателĕ Маршал Ким Ир Сен юлашки сăмах туса каланă.

Сесси Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Совет Союзĕнче, Китайра тата халăх демократи çĕршывĕсенче пулнă правительство делегацийĕсен ĕçĕсене ырласси çинчен пĕр кăмăллă пулса решени йышăннă.

Верховнăй халăх пухăвĕ Ким Дар Хена Верховнăй халăх пухăвĕн председатель ĕçĕсенчен хăтарасси çинчен тата ун вырăнне Ли Ен депутата суйласси çинчен постановлени йышăннă.

Çĕнĕ çитĕнӳсен çулĕ

СОФИЯ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). 1953 çул Болгари Халăх Республикине индустриализацилес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунă çул пулса тăрать. Болгари социализм çулĕпе ăнăçлăн пырать. Кăçал, Болгарири иккĕмĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕнче, Болгарири ĕççыннисем темиçе пысăк промышленность предприятине ĕçе янă. Вăл предприятисене Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем пулăшнипе тунă.

Иртнĕ çуркунне çĕршыври чи пысăк водохранилищĕсенчен пĕрне — Росица юханшывĕ çинчи Александр Стамболийский ячĕпе тăракан водохранилищене шыв тултарма тытăннă. Çуллахи вăхăтра водохранилищери шывпа 16.000 гектар çинчи тĕштырăсемпе техникăлла культурăсене шăварнă. Рудозем тата Димитровă хулисенче руда тасатакан фабрикăсем туса лартнă. Фабрикăсене техникăн юлашки вăхăтри çитĕнĕвĕсем тăрăх тунă.

Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарас умĕн Болгари халăхĕ производствăра тунă пысăк çитĕнĕве палăртнă: сĕнĕрен туса лартнă В. И. Ленин ячĕпе тăракан металлурги завочĕ ĕçлеме пуçланă. Икĕ мартен-кăмаки тата прокатнăй стан хурçăпа прокат ытларах та ытларах туса кăлараççĕ. Çак кунсенче изоляторсем тăвакан завод ĕçлеме пуçланă.

Çĕршыври çăмăл промышленность икĕ пысăк предприятипе пуянланнă: Габрово хулинче «Балкан» ятлă çип арлакан фабрика, Пловдив хулинче — «Марица» ятлă çип арлакан фабрика уçăлнă.

Болгарире хими промышленноçĕ аталанать

СОФИЯ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх влаçĕн çулĕсенче Болгарире хими промышленноçĕ тунă. Совет Союзĕ пулăшнипе пула, И. В. Сталин ячĕпе тăракан хими комбиначĕ, С. Кираджиев ячĕпе тăракан целлюлоза завочĕ туса лартнă. Халĕ К. Маркс ячĕпе тăракан сода завочĕ тăваççĕ. Çĕршывра азот удобренийĕсем, кислотасем, целлюлоза, анилиновăй сăрăсем, тир тумалли экстрактсем, синтетически çăмăлă тата ытти химикалисем туса кăлараççĕ. Вĕсене Болгари иртнĕ вăхăтра урăх çĕршывсенчен кӳрсе тăнă. Халĕ Болгари хими продукчĕсене хăй урăх государствăсене ăсатать.

«Хими промышленноçĕ» пĕрлешĕвĕнче ĕçлекенсем çулталăкри плана срокчен 27 кун маларах тултарнă. Кăçалхи вунпĕр уйăх хушшинче хими промышленноçĕ, 1948 çулхипе танлаштарсан, виçĕ хут ытларах продукци туса кăларнă.

Хими промышленноçĕнчи рабочисем совет новаторĕсен опычĕпе анлăн усă кураççĕ.

КЕНИРИ ТЕРРОР

ПАРИЖ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Найробирен пĕлтернинчен çакă паллă пулнă: юлашки эрне хушшинче Англи çарĕсем Кенире 72 негра вĕлернĕ, 50 негра тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Найробирен çапла пĕлтерет: ĕнер Кенире Кикуйю ăрăвĕнчи 8 негра вĕлермелле туса приговор йышăннă.

КАПИТАЛ ÇĔРШЫВĔСЕНЧЕ ĔÇСĔРЛĔХ ӲСЕТ

★ «Арбейтер-цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Австрире ĕç тупайманнисен хисепĕ 200 пин. çынтан иртнĕ. Декабрьте малтанхи икĕ эрне хушшинче ĕç тупайманнисен хисепĕ 35 пин çын чухлĕ ӳснĕ.

★ Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ США-ри суту-илӳ министерстви пĕлтернине панă. Пĕлтернинчен çакă курăнать: кăçал «çуллахи вăхăтран пуçласа» Америкăри предприятисенче ĕçлекен рабочисемпе служащисен хисепĕ 700 пин çын чакнă. Суту-илӳ министерстви ĕçлекенсен хисепĕ чакнипе «промышленноçăн нумай отраслĕсенче» производство чакнă пирки пулнă тесе ăнлантарса панă.

Декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС).

Мосаддыка суд туни пирки

ПАРИЖ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Тегеранри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян Мосаддык Верховнăй суда апелляци панă. Унта вăл çапла çырать: ăна суд тунă трибуналăн суд тума право пулман, çав трибунала законсăр йĕркепе тунă, тенĕ.

Культурăлла пурнăç хроники

Ачасен аннĕ-аттĕсем валли. Советская районĕнчи чылай шкулсенче педагогика ыйтăвĕсем тăрăх ĕççыннисем хушшинче лекцисем ирттересси йĕркеленĕ. Çак кунсенче Шăмăршăри çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ С. Ильин юлташ ачасене çемьере воспитани парасси çинчен лекци вуласа панă.

Шахмат турнирĕ. Красноармейски МТС-ĕнче шахмат вăййин енĕпе мала тухассишĕн механизаторсем хушшинче ăмăрту пулнă. Ăмăртура А. Аврамов юлташ мала тухнă.

Колхозлă ялта. Пуян та культурăллă пурăнаççĕ Андреев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем (Хĕрлĕ Чутай районĕ). Ялта электростанци пур, кашни килтех Ильич лампочкисем çутатаççĕ. Колхозниксем кану вăхăтне клубра ирттереççĕ. Кунта библиотекăра кĕнекесем илсе вулаççĕ, шахматла-шашкăлла выляççĕ. Вулакансен йышĕ 500 çын ытла. Кăçал клубра киностационар уçнă. Колхозниксем кино курма йышăн çӳреççĕ.

Культура таварĕсем туянаççĕ. Елчĕк районĕн центрĕнчи культура таварĕсем сутакан магазинра ялсенчи халăх нумай. Ĕççыннисем патефонсемпе приемниксем тата ытти таварсем чылай туянаççĕ. Магазин кăçалхи товар çаврăнăш планне 120 процент тултарнă.

Рабочисен канăвĕ. Кăçал Канашри вагонсем юсакан заводра ĕçлекен 126 çын çĕршыври курортсемпе санаторисенче тата кану çуртĕсенче каннă.

Çак кунсенче платник Ф. Епифанов, рессорщик Н. Петров, машинист П. Садыков тата ытти юлташсем — пурĕ 11 çын санаторисемпе кану çуртĕсене кайнă.

Пĕр колхозăн 5 автомашина

СОВЕТСКИ. «Дружба» колхоз хуçалăхĕ çулленех çирĕпленсе тĕреклешет. Нумаях пулмасть колхоз «ГАЗ-51» йышши çĕнĕ автомашина, авăн çапмалли 2 двигатель туянчĕ. Халĕ колхозра пилĕк автомашина шутланать.

Н. СЕРГЕЕВ.

Шупашкар хула Совечĕн (тăваттăмĕш созыв) тăххăрмĕш сессине пухасси çинчен

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ депутатсене çакăн çинчен пĕлтерет: Хула Совечĕн (тăваттăмĕш созыв) тăххăрмĕш сессийĕ 1953 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче, ытларикун, каçхине 7 сехетре уçăлать.

Сесси ларăвĕ Советсен çуртĕн пысăк залĕнче пулать (Ленинградски урам, 42-мĕш çурт).

ĔÇСЫННИ ДЕПУТАЧĔСЕН ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ИСПОЛКОМĔ.

Пĕлтерни

Декабрĕн 25-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче диалектикăлла тата историлле материализма вĕренекенсене валли лекци пулать. Лекци темми: «Необходимость и случайность в природе и обществе».

Лектор Г. Г. Германов юлташ.

• • •

Декабрĕн 25-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче парти историне вĕренмелли иккĕмĕш çул ĕçлекен кружок руководителĕсен семинарĕ пулать.

Семинар руководителĕ З. И. Федорова юлташ.

• • •

Декабрĕн 25-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче парти историне марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх вĕренмелли пĕрремĕш тата иккĕмĕш çул ĕçлекен кружок руководителĕсен семинарĕ пулать.

Семинар руководителĕсем П. М. Михайлов тата А. Н. Воробьев юлташсем.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — декабрĕн 25-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Нарспи».

ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔНЧЕ — декабрĕн 25-мĕшĕнче «Красный галстук».

Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА» — декабрĕн 25-мĕшĕнче «Застава в горах».

«УДАРНИК» — декабрĕн 25-мĕшĕнче «Завтрак у предводителя».

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн промышленноçпа строительствăра ĕçлеме рабочисем пухакан панĕ Куйбышев облаçĕнчи стройкăсене, Мускав облаçĕнче çĕр кăмрăкĕ кăларнă çĕрте, Молотов облаçĕнчи «Комилес» комбиначĕн вăрманпромхозĕсене ялсенчи ĕçлеме, çавăн пекех Вологда облаçĕнчи вăрманпромхозсенче тата «Чувашлес» трестĕн вăрманпромхозĕсенче сезонла ĕçлеме рабочисем пухать. Кирек мĕнле специальноçлă рабочисене те, специальность çуккисене те ĕçе илеççĕ.

Строительствăра тата Çĕр кăмрăк министерствин предприятийĕсенче пĕр çулталăк ĕçлеме договор тунă рабочие каялла илмелле мар пĕр вăхăтлăх пулăшу, 150 тенкĕ параççĕ, икĕ çуллăх е унтан ытларах срока договор тусассăн каялла илмелле мар пулăшу икĕ хут ытларах параççĕ.

«Комилес» комбиначĕн вăрманпромхозĕсенче пĕр çулталăк ытларах ĕçлеме договор тунă рабочисене пĕр вăхăтлăх пулăшу 500 тенкĕ. Вологда облаçĕнчи вăрманпромхозсенче вăрман хатĕрлемелли сезонта ĕçлеме кайакан рабочисене — 200 тенкĕ параççĕ.

Пур рабочисене те ĕç вырăнне кайнă чухне суд çинче пулнă вăхăтра кашни талăка 10 тенкĕ параççĕ, çул укçи тӳлеттермеççĕ, рабочи валли 240 килограмм, çемьери кашни çын валли 80 килограмм багаж укçа тӳлеттермесĕр илсе кайма юрать.

Ĕç вырăнне çитсен çемьеллĕ рабочисене хваттер, пĕччен çынсене общежитире пулăмне вырнаçтараççĕ тата пӳлĕмре кирлĕ япаласем параççĕ. Рабочисене вырăна çитсен пĕр талăк хушшинче договорта кăтартнă ĕçе вырнаçтараççĕ.

Ĕç договорĕ тăвасси çинчен райисполкомсенчи уполномоченнăйсемпе инспекторсенчен, Шупашкар хулинче — Заводской урамра 34-мĕш çуртра ыйтса пĕлме пулать.

ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔН РАБОЧИСЕМ ПУХАКАН ПАНĔ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 8. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—8-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—15-37, парти пурнăç пайĕ—3-09, облаçри пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—6-31, вулакансен пайĕ—5-57, культура пайĕ—6-81, совет строительстви пайĕ—3-54, çыруcен пайĕ—7-32, издательство кантури—0-23.

НГ 00683 Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2017. Тираж 20.000 экз.